ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Февраль 25 юнкун
№ 39 (8948)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Совет демократийĕн çĕнтерĕвĕ (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли стахановла уйăхлăх (1 стр.).
КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТАМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН ЧАПЛА ÇĔНТЕРĔВĔ: **И. Сергеев.** — Сталин ятне чĕрере тытса. **А. Жирнов.**— *Колхозлă ял сасăлать.* (2 стр.).
И. Жадецкий.—Критикăпа самокритикăна сарма условисем туса памалла (2 стр.).
В. Симсов.—Комсомол организацийĕсене ертсе пырасси (3 стр.).
Х. Александров.—Шкул ачисене тĕрĕс çырма тата тĕрĕс калаçма вĕрентер (3 стр.).
ПЕЧĔК ФЕЛЬЕТОН: **Ю. Скворцов.**—Хăнасем килеймерĕç... (3 стр.).
Я. Макаренко.—Çĕнелнĕ Польшăра (3 стр.).
П. Фролов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
«Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин Германи историйĕ çинчен» ятлă вичĕ томлă кĕнеке (4 стр.).
Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине урăх çĕршывсенче уявлани (4 стр.).
Пĕтĕм Китайри геологсен конференцийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Шкулсенче историе вĕрентес ĕçе лайăхлатассишĕн

Шкулсенче историе вĕрентни çитĕнекен ăрăва идейăллă воспитани памалли хăватлă май пулса тăрать. Историе вĕрентсе, учительсем вĕренекенсене пирĕн Тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнче историйĕнче малта тăракан вырăнне ăнланса илме пулăшаççĕ, вĕсене совет стройĕ капитализмла стройран малта тăнине, социализмлă культура буржуаллă культурăран малта тăнине кăтартса параççĕ, çавна май вĕренекенсен совет патриотизмĕ туйăмне аталантарса пыраççĕ.

Историе вĕреннипе пирĕн çамрăксем историн тĕп факчĕсене пĕлсе çитеççĕ, историри событисем хушшинчи çыхăнусене вĕренеççĕ, историллĕ процесăн закономерноçне ăнланса пыраççĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă решенисем, Сталин юлташăн «Марксизм тата чĕлхе ыйтăвĕсем» ятлă ĕçĕ юлашки çулсенче шкулсенче историе вĕрентес ĕçĕн пахалăхне чылай ÿстерме пулăшрĕç. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă çĕнĕ гениллĕ произведенийĕ шкулсенче историе вĕрентес ĕçе татах та лайăхлатма пысăк майсем уçса пачĕç.

Историе вĕрентекен чылай учительсем вĕрентÿ ĕçĕн пахалăхне, унăн идейăллă-теориллĕ шайне пĕрмаях ÿстерсе пыраççĕ. Çавна май вĕренекенсен историе вĕренес хаваслăхĕ ÿсет, вĕсен пĕлĕвĕсем тарăнланса çирĕпленсе пыраççĕ. Чурачăк районĕнчи Йĕкĕрварти вăтам шкулта историе вĕрентекен В. Венедиктов тата З. Степанова учительсем уроксене тĕплĕн хатĕрленсе пысăк пахалăхпа ирттереççĕ. Истори урокĕсенче вĕсем марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсемпе, илемлĕ литературăпа, тĕрлĕ пособисемпе пĕлсе усă кураççĕ. Историпе вĕренмелли материала вĕсем пирĕн çĕршывра тата ытти çĕршывсенче хальхи вăхăтра пулса иртекен событисемпе ăнăçлăн çыхăнтарса пыраççĕ. Çавна пула вĕренекенсем истори материалне лайăхрах та тĕплĕрех ăнланса илеççĕ. В. Венедиктов тата З. Степанова учительсем пирĕн Тăван çĕршывăн тĕнче историйĕнчи питех те пысăк рольне, пирĕн çĕршыв тĕнчере малта пынине тĕплĕн те ăнланмалла кăтартса параççĕ. Учительсем истори урокĕсене пысăк пахалăхпа, ăнланмалла та витĕмлĕ чĕлхепе ирттернĕ пирки, ку шкулта вĕренекен ачасем историе юратса вĕренеççĕ, пурте пекех вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Çавăн пекех историе Комсомольскинчи вăтам шкул учителĕ К. Парфеньева, Чкаловски районĕнчи Туçари вăтам шкул учителĕ М. Пыркин, Калинино районĕнчи Уйкас Юнтапари вăтам шкул учителĕ Л. Захаров пысăк пахалăхпа вĕрентеççĕ. Вĕсем вĕренекенсене историпе тарăн та тĕплĕ пĕлÿсем парса пыраççĕ. Пирĕн çĕршыв историйĕн пĕтĕм тĕнче историйĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ факчĕсемпе пĕлсе усă курса, вĕсем вĕренекенсен патриотла туйăмне ÿстерсе пыраççĕ. Вĕсен класĕсенче историпе вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисем пачах та çук.

Анчах чылай шкулсенче историе вĕрентес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Хăшпĕр учительсем историри фактсене, вĕсем хăçан пулса иртнине, историре мĕнле паллă çынсем пулнине, историре палăрнă хуласемпе çĕршывсен ячĕсене асăннипех иртсе каяççĕ. Историе çапла вĕрентни вĕренекенсене истори материалне ăнланса илмесĕр астуса пырасси патне илсе пырать, вĕсене историллĕ процесăн закономерноçне ăнланса илме чăрмантарать. Историе çапла вĕрентни историн вĕренекенсене коммунизмла воспитани парас ĕçри пĕлтерĕшне чылаях чакарать.

Хăшпĕр шкулсенче историе вĕрентес ĕçре методологиллĕ йăнăшсем, историре пулса иртнĕ ĕçсем çине объективистла пăхни, историри фактсене тĕрĕс мар сутатса пани те тĕл пулать. Сăмахран, Советскинчи вăтам шкул учителĕ П. Иванов X—XI-мĕш ĕмĕрсенче Киев Руçĕн культури аталанса пынине вĕренекенсене тĕрĕс мар ăнлантарса панă. Киев Руçĕн культурине вăл Византи культурине çĕнетсе урăхлатнă культура пек кăтартса панă. Çапла вăл Киев Руçĕн культури авалхи, Киевччĕнхи тапхăртах Хĕвелтухăç Европăри славян халăхĕ хăй хывнă культура никĕсĕ çинче аталанса пынине палăртмасăр хăварнă.

Историе вĕрентес ĕçре Етĕрнери вăтам шкулта уйрăмах пысăк çитменлĕхсем пур. Ку шкулта историе вĕрентекен Ф. Шарабин учитель СССР историйĕнчи фактсене хăшпĕр чухне йăнăш, пăсса ăнлантарать. Историе вĕрентес ĕçре ытти хăшпĕр шкулсенче те йăнăшсемпе çитменлĕхсем пурри палăрать.

Историе вĕрентекен нумай учительсем вĕренекенсене историе вĕренмелли материала уроксенче питĕ кĕскен, витĕмсĕр ăнлантарса параççĕ, программăра кăтартнă хăшпĕр паллă ыйтусене çутатмасăр иртсе каяççĕ, çавна пула вĕренекен материалăн идейăллă пахалăхне, унăн коммунизмла воспитани парас ĕçри пĕлтерĕшне чылай чакараççĕ.

Хăшпĕр учительсем хăйсен пĕлĕвĕсене кунсерен ÿстерсе, марксизм-ленинизм теорине вĕренсе алла илсе пымаççĕ. Çавăн пек учительсен вĕрентÿ пахалăхĕ те аялти пусăмра тăрать, вĕрентÿ ĕçĕнче те йăнăшсем пулаççĕ.

Шкулсенче историе вĕрентни ачасене коммунизмла воспитани парас ĕçре тĕп вырăнта тăнине шута илсе, çутĕç органĕсен, шкул директорĕсен, шкулсенчи пуçламăш парторганизацисен, учительсен çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле. Истори учителĕсемшĕн вĕрентÿ ĕçĕнче вĕренекенсене пирĕн çĕршывăн тĕнче историйĕнчи малти вырăнне урокран урока, витĕмлĕ тĕслĕхсемпе кăтартса парасси тĕп вырăнта тăмалла. Учительсем истори урокĕсенче пирĕн çĕршывра Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе социализм çĕнтернин историне, пирĕн çĕршыв—хăватлă индустриллĕ тата социализмлă шултра ялхуçалăхлĕ держава, чи малта тăракан общество тата государство стройĕн çĕршывĕ, тĕнчере малта тăракан культурăллă çĕршыв пулнине лайăх кăтартса памалла. Истори урокĕсенче ССР Союзĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтернин пĕтĕм тĕнчери историллĕ пĕлтерĕшне, вăрçă хыççăнхи вăхăтра коммунизм тăвас ĕçре тунă çитĕнÿсене, ССР Союзĕн çирĕп миршĕн тата демократишĕн кĕрешес ĕçри ертсе пыракан рольне тĕплĕн çутатса памалла.

Çавăнпа пĕрлех вĕренекенсем США-н ĕлĕкхи тата хальхи агрессиллĕ политики, вăл ют çĕрсене вăрă-хурахла тытса илни, унăн вак халăхсене чуралантарас политики, вăл негрсене тискеррĕн эксплуатацилени, Америка «демократийĕ» тенĕскерĕн халăха хирĕçле киревсĕр йĕркисем çинчен пĕлчĕр. Истори урокĕсенче США 1918—1920 çулсенче Совет çĕршывне хирĕç пынă интервенцие активлăн хутшăннине, тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн вăл реакципе агрессин тĕп центрĕ тата тĕрекĕ пулса тăнине уйрăмах хытă палăртас пулать.

Историе вĕрентес ĕçре учительсен учебникĕсемпе кăна мар, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсемпе, илемлĕ литературăпа, тĕрлĕ пособисемпе анлăн усă курмалла. Уйрăмах Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă çĕнĕ гениллĕ ĕçĕпе пĕлсе, тивĕçлĕн усă курни кирлĕ. Çак гениллĕ ĕçри положенисемпе усă курни историе вĕрентес ĕçĕн пахалăхне чылай хăпартма пулăшĕ.

Çутĕç министерствин, районсенчи, хуласенчи çутĕç пайĕсен шкулсенче историе вĕрентес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле. Историе вĕрентессин идейăллă-теориллĕ шайне ÿстерес ĕçре учительсен пĕлĕвĕсене, вĕсен квалификацине хăпартасси паллă вырăнта тăрать. Историе вĕрентекен учительсем валли тăтăшах курссем, семинарсем ирттерни кирлĕ. Çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче историе вĕрентекен учительсем хушшинче вăтам образовани çеç илнисем чылай. Çав учительсене заочнăй вĕренĕве явăçтармалла.

Иртнĕ çултанпа парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем çумĕнче истори тата Конституци вĕрентекен учительсем валли ялан ĕçлекен семинарсем организациленĕ. Çак семинарсен ĕçне лайăхлатса пырасси, занятисене çÿлти пусăмра ирттересси, занятисенче учительсен активлăхне вăйлатса пырасси— парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри.

Шкулта историе вĕрентес ĕçĕн пахалăхне лайăхлатас ĕçре учительсене шкулти пуçламăш парторганизацисем пулăшса пыма тивĕç. Вĕсем историе вĕрентес ĕçпе куллен интересленмелле, ку ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра палăртмалла, историе вĕрентес ĕçĕн пахалăхне ÿстерес ыйтусене коммунистсен пухăвĕсенче сÿтсе явмалла.

Историе вĕренни вĕренекен çамрăксене тĕнче çине марксистла-ленинла пăхма вĕрентет, çамрăк ăрăва социализмлă Тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентет, хастарлă, хăюллă, кирек епле йывăрлăхсене те çĕнтерме пултаракан совет патриочĕсене — коммунизм обществи тăвакансене вĕрентсе çитĕнтерме пулăшать. Шкулсенче историе вĕрентес ĕçе кунсерен лайăхлатса пырасси, ăна парти лартакан требованисен çÿлĕшне хăпартасси—çутĕç органĕсемпе парти организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать.

Икĕ уйăхри плана тултарнă

ХУСАН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Бавлынефть» тресчĕн, пĕрремĕш промыслинче ĕçлекен нефтяникисем «Татнефть» пĕрлешĕвĕнче пуринчен малтан нефть кăлармалли икĕ уйăх планне тултарнă.

Совет демократийĕн çĕнтерĕвĕ

КИШИНЕВ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Молдаван столицинчи ĕçсыннисем вырăнти Советсен суйлавне пысăк уява кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç.

48-мĕш суйлав округĕнче уйрăмах савăнăçлă. Кунта Кишинев округ Советне 16-мĕш суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма халăхсен аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин баллотировкăна тăнă. Суйлавçăсем сасăламалли вăхăт çитиччен нумай малтан пухăннă. Вĕсем хушшинче Сталин юлташа кандидата тăратнă чугун çул çинче ĕçлекен рабочисем нумай. Ирхине 9 сехет тĕлне суйлавçăсем пурте сасăласа пĕтернĕ.

Молдаван столицинчи ĕçсыннисем вырăнти Советсене депутата суйлама чи лайăх çынсене кандидата тăратнă. Депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче—маневрсем тăвакан пăравус çинче ĕçлекен машинист И. В. Самойлова, СССР Наука академийĕн Молдаври филиалĕн президиум председателĕн заместителĕ Я. С. Гросул, учительница М. С. Кока, республика халăх артисчĕ М. М. Апостолов тата ыттисем те.

Кăнтăрла иртсен икĕ сехет тĕлне Кишинев хулинчи суйлавçăсем пурте тенĕ пекех сасăласа пĕтернĕ.

Молдаван ССР-ĕнчи вырăнти Советсен суйлавĕ тата тепĕр хут совет демократийĕн çĕнтерĕвне, партипе халăх хушшинчи çирĕп пĕрлĕхе кăтартса пачĕ.

Хăватлă пĕрлĕх

ВИЛЬНЮС, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Литва столицинче ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Хĕрлĕ хăмачсем суйлав участокĕсем вырнаçнă çуртсене илемлетеççĕ.

Литва ССР государство консерваторийĕ. Консерваторине кĕнĕ çĕрте И. В. Сталин юлташăн портречĕ. Ковер сарса тухнă коридор пысăк пÿлĕме илсе пырать. Кунта 33-мĕш суйлав округĕнчи суйлавçăсем сасăлаççĕ. Вильнюс хула Советне депутата суйланма ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ çак округра баллотировкăна тăнă. Ирхине 9 сехет тĕлне суйлавçăсем пурте сасăласа пĕтернĕ.

Литва халăхĕ паян вырăнти Советсене хăйĕн чи лайăх хĕрĕсемпе ывăлĕсене суйлать. Вильнюс область Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче — чăлхапа трикотаж фабрикинче ĕçлекен паллă стахановка-комсомолка Я. Дарвидайте, Литва ССР государство драма театрĕнче ĕçлекен артист, Сталинла премисен лауреачĕ И. Каваляускас, врач О. Богданова тата ыттисем те. Вĕсем Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн паттăр кĕрешнипе, обществăллă ĕçе активлă хутшăннипе хăйсен суйлавçисем умĕнче пысăк шанăçа тухнă.

МИНСК ХУЛИНЧЕ

МИНСК, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине 6 сехетре Белоруссин столицинчи 145 суйлав участокĕн алăкĕсем уçăлнă.

Пĕрремĕш суйлав округĕ. Кунта Минск хула Советне депутата суйланма Иосиф Виссарионович Сталин баллотировкăна тăнă. 1905 çулта «Потемкин» броненосец çинчи восстание хутшăннă П. В. Голубович пенсионер пуринчен малтан сасăлать. Унпа пĕрле унăн ывăлĕсем — офицер Николай, связист Владимир, чугун çул çинче ĕçлекен Федор, шофер Александр тата Крупская ячĕпе тăракан фабрикăра ĕçлекен хĕрĕ Тамара сасăлаççĕ.

Ытти суйлав участокĕсенче те сасăласси йĕркеллĕ иртет. Бюллетеньсене кĕртнисем хушшинче — Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешсе чапа тухнă производство новаторĕсем, ученăйсем.

14 сехет тĕлне Советлă Белоруссин столицинчи суйлав участокĕсенче суйлавçăсем пурте пекех сасăласа пĕтереççĕ.

Белорус ССР-ĕнчи хуласемпе ялсенче пуринче те ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ пысăк уяв пек иртнĕ.

Гомельпе Могилев хулисенчи машиностроительсем, Полесье тăрăхĕнчи мелиораторсем, «Дружба народов» ГЭС строителĕсем, Гродно облаçĕнчи кăшман акса тăвакан колхозникисем — Советлă Белоруссинчи мĕнпур ĕçсыннисем вырăнти Советсен суйлав кунĕ хăйсем Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви, Сталин юлташ тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине тата тепĕр хут кăтартрĕç.

Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ А. П. Шилинăн бронза бюсчĕ

ЛЕНИНСК-КУЗНЕЦКИЙ (Кемерово облаçĕ), февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ Афанасий Петрович Шилина чысласа бронза бюст лартнă ятпа уяв пулнă.

Митингра парти, совет, комсомол организацийĕсен представителĕсем тухса каланă. Вĕсем Кузнецк хулинчи шахтерсем коммунизмшăн кĕрешсе тунă çитĕнÿсем çинчен каласа панă.

Митинга пухăннисем Шилин полковника ăшшăн кĕтсе илнĕ. Вăл хăй ертсе пыракан çар чаçĕн пурнăçĕпе воинсен вĕренĕвĕ çинчен, вĕсем боевой тата политикăллă вĕренÿре тунă çитĕнÿсем çинчен каласа панă.

Совет Союзĕ тăрăх



Мускав. Ленинградски районта иртнĕ икĕ çул хушшинче пурăнмалли çуртсем 275 пин тăваткал метр чухлĕ лартнă. Песчанăй урамра, Левитан урамĕнче, Октябрьски урамра, Хорошевски тата Ленинградски шоссесен икĕ айккинче туса лартнă çĕнĕ çуртсенче Мускаври ĕçсыннисем вуншар пин çын пурăнаççĕ.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ново-Песчанăй урамри пурăнмалли çĕнĕ çуртсем.
Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ.

Мускав салючĕ

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн Тăван çĕршыв столицинчи — Мускаври ĕçсыннисем, çĕршыври пĕтĕм ĕçсыннисемпе пĕрле, пĕтĕм халăх уявне—Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине палăртнă. Столицăри предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче, çар чаçĕсенче чаплă уяв ячĕпе докладсем, лекцисем пулса иртнĕ.

Пиншер ĕçсыннисем тата Мускав гарнизонĕн воинĕсем В. И. Ленинăн Центральнăй музейĕнче, Совет Çарĕн Центральнăй музейĕнче, ССР Союзĕн революци музейĕнче, И. В. Сталин юлташа панă парнесен выставкинче пулнă. Çавăн пекех столицăри театрсенче халăх нумай пулнă. Вĕсенче СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсен ячĕпе спектакльсемпе концертсем пулнă.

Кас пулса çитсен прожекторсен хăватлă пайăркисем Мускава çутатса тăнă.

Каçхине 8 сехетре артиллери салючĕ пулнă. Пĕлĕт çинче тĕрлĕ тĕслĕ ракетăсем ялкăшаççĕ. СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 35 çул тултарнă ятпа артиллерирен 20 хут пĕр харăс персе салют тунă. (ТАСС).

СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 35 çул тултарнине уявлани

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине савăнăçлăн паллă тунă.

Ленинградра, Киевра, Минскра, Бакура, Тбилисире, Ереваньре, Сталинабадра, Ригăра, Таллинра, Вильнюсра, Кишиневра, Новосибирскинче тата ытти хуласенче ĕçсынни депутачĕсен хула Совечĕсен парти, совет тата обществăллă организацисен представителĕсемпе, çавăн пекех Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн представителĕсемпе пĕрле савăнăçлă ларусем пулса иртнĕ. Ларусенче Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен мухтавлă та паттăр кун-çулĕ çинчен докладсем итленĕ. Пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсем Совет Союзĕн мирпе хăрушсăрлăх хуралĕнче тăраççĕ.

Савăнăçлă ларусенче пулнисем пысăк çĕкленÿпе совет халăхĕн çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ патне саламсем янă.

Ĕнер союзлă республикăсен столицисенче, çавăн пекех Калининградра, Львовра, Хабаровскра, Владивостокра тата герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре, Одессăра артиллерирен персе салют тунă.

Чаплă юбилей ячĕпе халăх пур çĕрте те савăннă.

Февралĕн 20-мĕшĕ

Вăрман хатĕрлемелли стахановла уйăхлăх

Мартăн 20-мĕшĕ

КЕРКУННЕПЕ ХЕЛЛЕХИ ВАХАТРА ВАРМАН ХАТЕРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧАВАШВАРМАН» ТРЕСТ ЕНЕПЕ 1953 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН
СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	43,1	53,7	47,4
Элĕк	46,8	41,8	30,6
Вăрнар	48,0	42,6	52,5
Йĕпреç	42,2	21,8	28,3
Ишлей	—	—	56,3
Калинино	45,6	51,7	43,0
Канаш	53,7	27,2	32,6
Комсомольски	92,9	49,0	74,5
Куславкка	115,0	100.0	107,8
Красноармейски	39,2	9,2	31,5
Хĕрлĕ Чутай	55,2	20,4	—
Кувакино	42,2	22,8	47,5
Сĕнтĕрвăрри	81,7	62,2	—
Муркаш	83,3	76,1	—
Октябрьски	83,2	72,1	54,5
Пĕрвомайски	76,0	41,3	46,6
Пăрачкав	63,5	67,4	19,1
Советски	41,6	66,1	18,5
Сĕнтĕр	—	29,7	—
Вăрмар	62,5	16,7	49,5
Çĕрпÿ	32,0	10.7	41,3
Шупашкар	136,6	123.8	122,6
Чкаловски	99,3	64,4	52,2
Чурачăк	59,7	39,2	84,8
Шăмăршă	63,1	18,1	67,4
Шăхасан	57,3	32,9	36,8
Çĕмĕрле	73,3	84,9	101,5
Етĕрне	—	19,1	37,9
Елчĕк	28,5	85.1	34,3
Тăвай	45,5	12.4	35,6

Государство заданине чыслăн пурнăçлар

Комсомольски районĕнчи колхозникисем Тăван çĕршыв умĕнче пысăк обязательство илчĕç, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарма сăмах пачĕç. Çавăн хыççăн малта пыракан колхозсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлса кайрĕ.

«Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсенче ĕçлекен 18 колхозран 10 колхоз йывăç касмалли, 7 колхоз турттарса кăлармалли плана ăнăçлăн тултарчĕç. «Алга» колхоз 3.000 кубометр вырăнне 3.397 кубометр йывăç касса хатĕрлерĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозпа «Красная звезда» колхоз членĕсем те хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçларĕç.

Асăннă колхозсен председателĕсемпе парторганизаци секретарĕсем вăрман хатĕрлевĕпе куллен интересленчĕç, колхозниксене тухăçлă ĕçлеме хавхалантарса пычĕç. Вĕсем, вăрмана час-часах кайса, ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма, ĕçе тĕрĕс организацилеме, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма пулăшрĕç. Юр нумайăшне шута илсе, вĕсем вăрмана ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ ытларах уйăрса яма тăрăшрĕç.

Анчах районти хăшпĕр колхозсен председателĕсемпе ял Совечĕсем колхозниксене мобилизацилемеççĕ, çавна пула район хăй илнĕ социализмлă обязательствăна вăхăтра пурнăçлаймарĕ. Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне район йывăç касса хатĕрлемелли плана 92,9 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана—49 процент, турттарса кăлармалли плана—74,5 процент çеç тултарчĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсемпе малта пыракан «Гигант», Калинин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыраççĕ. Асăннă колхозсен правленийĕсем вăрманта ĕçлеме ятарласа бригадăсем туман. Çавна пула пĕрисем ячĕшĕн кайса килеççĕ те, теприсене уйăрса яраççĕ.

«Красный маяк» колхоз председателĕ Такмаковпа парторганизаци секретарĕ Кокарев юлташсем час-часах: татăклă мерăсем йышăнтăмăр, çитес вăхăтра плана тултаратпăр, пирĕншĕн ан пăшăрханăр, теççĕ. Анчах пĕр уйăх хушши колхоз пĕр кубометр йывăç та хатĕрлемен. Халăх хуçалăхне сăмахсемпе обязательствăсем мар, йывăç кирлĕ.

Районти колхозниксем уйăхлăх ирттересси çинчен пĕлтернине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Уйрăм колхозсенчен вуншар колхозник вăрмана кайрĕ. Анчах вăрманта ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ çителĕксĕр. Хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсем плана ăнăçлă тултарса çитермелĕх ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ уйăрса яма тăрăшмаççĕ.

Çак кунсенче суйлавçăсем ял Совечĕсемпе район Советне депутата ĕçре малта пыракан, государство интересĕсене чи çÿлти вырăна хуракан çынсене суйларĕç. Вĕсем ĕçсыннисене уйăхлăха активлă хутшăнма, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарма мобилизацилеме тивĕçлĕ. Райсовет исполкомĕ колхозниксен пуçарулăхĕпе пултарулăхне малалла ÿстерсе пыма, Тăван çĕршыва йывăç ытлăн-çитлĕн парса тăма татăклă мерăсем йышăнать.

П. ОСИПОВ,
Комсомольски райсовет исполкомĕн председателĕ.

ПУÇАРУЛЛĂ МЕХАНИЗАТОРСЕМ

КИРЕ. Вăрманта юр нумай, çанталăк сивĕ тăрать. Анчах пуçарулла механизаторсем йывăрлăхсене çĕнтерсе пыраççĕ. Панчугин шофер автомашина çумне çуна кăкарса вутă турттарать. Горшков, Лавров, Борисов, Журавлев шоферсем ĕç нормине куллен 150—200 процент таран тултарса пыраççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Сысуйкин юлташ уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл хăйĕн опычĕпе ыттисене паллаштарать, çамрăксене техникăна вĕрентет. Колькин юлташ çак кунсенче çеç курсран вĕренсе таврăннă. Халĕ вăл Сысуйкин юлташ патĕнче практикăра.

Уйăхлăх пуçланнăранпа вăрмана колхозниксем чылай килчĕç. Вăрманпромхозри стахановецсем хăйсен опычĕпе тата меслечĕпе колхозниксене паллаштараççĕ.

В. МАРКЕЕВ.

Тухăçлă ĕçлеççĕ

ВĂРНАР. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлес ĕçре çулленех малта пырать. Çак колхоз членĕсем кăçал та тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйăхлăха хутшăнса, К. Канькин, В. Кузьмин, Г. Николаев лавçăсем ĕç нормине куллен ăнăçлă тултараççĕ. Колхоз каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 126 процент тултарчĕ.

Йывăç каснă çĕрте 13 çын ĕçлет. Колхозăн 2.500 фестметр йывăç касса хатĕрлемелле пулсан, 2.100 фестметр касса хатĕрленĕ.

Колхозниксем Государство заданине уйăхлăх вăхăтĕнче чыслăн пурнăçлама сăмах пачĕç.

С. ФЕДОТОВ.

КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН ЧАПЛĂ ÇĔНТЕРĔВĔ

* * *

КОЛХОЗЛĂ ЯЛ САСĂЛАТЬ

КӲКЕÇ. Районти Культура çуртĕнче Кӳкеçри суйлав участокĕ вырнаçнă. Суйлав пуçланиччен комисси членĕсем суйлава мĕнле хатĕрленнине тепĕр хут пăхса тухрĕç.

— Пурте йĕркеллĕ, пек,— терĕ участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Варвара Гурьевна Надеждина юлташ.— Темиçе кун каярах суйлавçăсене йышăнма хатĕрленсе çитрĕмĕр.

Сасăламалли пӳлĕме электричество çути çутатать. Стенасем çинче — партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, пилĕк çуллăх план тăрăх тумалли ĕçсен диаграммисем. Икĕ суйлав ещĕкĕ, сасăламалли пилĕк кабина хатĕрленĕ. Урайне коверсем сарса тухнă.

...Пилĕк сехет кăна иртнĕ-ха. Ĕççыннисем районти Культура çуртне патнелле утма пуçларĕç. Ултă сехет çитнĕ тĕле унта 70 çын ытла пухăннă. Кашниех чи малтан Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн хăйĕн сассине пама васкать.

Ултă сехет. Суйлав участокĕн алăкĕсем уçăлассĕ. Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ В. Г. Надеждина суйлавçăсене вырăнти Советсен суйлавĕ çитнĕ ятпа саламларĕ, вĕсене хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçлама чĕнчĕ.

Сĕтел патне хура костюм тăхăннă, кăкăрĕ çине Ленин орденĕ тата медаль çакнă ватă çын утса пырать. Ку вăл— РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ Александр Капитонович Капитонов юлташ. Вăл чи малтан бюллетень илчĕ. Бюллетене урнăна янă чухне 69 çулхи учитель хумханса çапла каларĕ:

— Юлташсем! Паян эпир Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене Совета суйлатпăр. Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, эпир хамăрăн пурнăçа тата ытларах лайăхлатассишĕн, мирлĕ пурнăçшăн, Тăван çĕршыв хăватне ӳстерессишĕн сасăлатпăр.

Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ С. Захаров бюллетеньсене суйлав ещĕкне ярать:

— Мирлĕ пурнăçшăн, юнлă вăрçа хирĕç,— тет вăл.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри сĕтел патне пыраççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕ Н. Ведина, Кӳкеç МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ Ю. Чунаев юлташсем сасăлассĕ.

Кӳкеçри больницăра ĕçлекен Галина Орехова паян пуринчен те телейлĕ.

— Эпĕ 1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче çуралнă. Паян пĕрремĕш хут суйлава хутшăнтăм. Эпĕ паян район Советне депутата суйлама тăратнă Екатерина Артемьевна Артемьевăшăн, ял Советне депутата суйлама тăратнă Василий Ефимович Ефимовшăн—Кӳкеçри вăтам шкул директорĕшĕн тӳлли кăмăлпа сасăларăм,—терĕ вăл.

Леонид Яштайкин та кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăннă.

80 çулхи колхозник С. Е. Капитонов бюллетень илет.

80 çула çитнĕ пулин те Семен Капитонович çăмăл шăмшаклă, çирĕп сывлăхлă. Ăна хисеплесе суйлав участокне лашапа леçсе яма сĕннĕ. Ватă колхозник килĕшмен.

Сасăланă хыççăн суйлавçăсем хăйсен вăхăтне культурăллă ирттерессĕ. «Союзпечать» уйрăмĕ киоск уçнă. Унта çĕнĕ хаçат-журнал çителĕклĕ. Суйлавçăсем тĕрлĕ литература нумай туянассĕ. Культура çурчĕн сутă залĕ суйлавçăсемпе тулнă. Кӳкеçри вăтам шкулти, районти Культура çуртĕнчи, ачасен çуртĕнчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем концерт параççĕ.

Пуçламăш классенче вĕренекенсем (руководителĕ Т. М. Маркова юлташ) хăйсен пултарулăхне кăтартассĕ. 9 çулхи Леонид Васильев «Матроссен ташшине» пысăк ăсталăхпа ташласа пачĕ.

— Çавсен телейĕшĕн те сасăларăмăр, — тет 66 çулхи С. А. Ярков суйлавçă.

С. А. Ярков—Ильич ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозник, правлени членĕ Унăн паян икĕ савăнăç. Вăл хастарлă, шанчăклă çынсемшĕн хăйĕн сассине пачĕ. Ăна хăйне те пысăк хисеп тунă: 12-мĕш суйлав округĕ тăрăх Кӳкеç ял Советне депутата суйлаççĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ халăхăн чăн-чăн уявĕ пулчĕ. Суйлавçăсем хăйсен пысăк активлăхне кăтартрĕç. Кăнтăрла иртнĕ тĕле суйлавçăсем пурте тенĕ пекех сасăласа пĕтерчĕç.

А. ЖИРНОВ.

Сталин ятне чĕрере тытса

Республикăри Учительсен çурчĕ уяв тумĕпе тумланнă, кунта — Шупашкар хула Советне суйламалли 5-мĕш суйлав участокĕ. «Ырă сунса кĕтетпĕр»!—тесе эрешлесе çырнă сăмахсем аякранах курăнассĕ. Хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшессĕ, пур çĕрте те—суйлава чĕнекен лозунгсемпе плакатсем.

Сехет йĕппи шăп 6 сехет çинче. Суйлав комиссийĕн председателĕ М. Семенов юлташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет, суйлавçăсене сывлăх сунать, сасăлама чĕнет.

Чи малтан ватă пенсионер Истопленников юлташ сасăларĕ.

— Эпĕ 80 çула çитнĕ,—терĕ вăл— вĕсенчен 44 çулне патша самани вăхăтĕнчи йывăр та тертлĕ пурнăçпа пурăнса ирттернĕ. Нумай тарăхнă, нумай тӳснĕ. Халĕ тавралăха пăхатăн та — пур çĕрте те пурнăç вĕрет. кунтан-кун çĕршыв чечекленет. Мана, ватă çынна, государство пенси парса пулăшать. Совет влаçĕ кăна савăнăçлă та тулăх пурнăç пачĕ. Çавăншăн эпĕ Сталин юлташа тав тăватăп Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн, çирĕп миршĕн сасăлатăп.

Истопленников юлташ çак сăмахсене чĕререн калать.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри суйлав ещĕкĕ патне пырса, унта бюллетеньсем яраççĕ.

Сасăланă хыççăн суйлавçăсем кану пӳлĕмне каяççĕ, кунта вĕсем радио итлеççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ. Суйлав вĕçленниччен кану пӳлĕмĕнче сăвă-юрă, музыка янăрарĕ.

Суйлавçăсем суйлава активлăн хутшăнчĕç.

Ирхине 9 сехет тĕлне суйлавçăсенчен нумайăшĕ сасăлама ĕлкĕрчĕ.

Çĕрле, 12 сехетре, суйлав вĕçленет. Суйлав комиссийĕ бюллетеньсене шутлама тытăнчĕ. Нумай суйлав бюллетенĕсем çине суйлавçăсем: «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн, çирĕп миршĕн!», «Сывă пултăр Сталин юлташ!»—тесе çырнă.

5-мĕш суйлав участокĕнчи суйлавçăсем, пĕтĕм совет суйлавçисем пекех, Сталин юлташăн ятне асра тытса, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăларĕç. Вĕсем халăхсен çулпуçне Сталин юлташа чун-чĕререн юратнине, Ленин—Сталин партине парăннине, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хатĕррине кăтартса пачĕç.

И. СЕРГЕЕВ.

ПĔР ШУХĂШ-КĂМĂЛПА

МУРКАШ. Кашмаш суйлав участокĕ. Ултă сехетре участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Н. Петров юлташ суйлавçăсене сасăлама вăхăт çитни çинчен пĕлтернĕ хыççăн, суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри суйлав бюллетенĕсене илсе, сасăлама васкаççĕ.

Акă 72 çулхи ватă суйлавçă Е. Скворцов юлташ бюллетеньсене суйлав ещĕкне янă чухне:

— Хамăрăн шанчăклă кандидатсемшĕн сасăласа, эпĕ большевиксен партийĕшĕн, аслă Сталиншăн, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн, пĕтĕм тĕнчери миршĕн сасăлатăп,—терĕ.

Кашни суйлавçă хăйĕн шухăшне каласа парасшăн.

— Совет Союзĕнчи суйлавçăсем пĕр шухăш-кăмăллă пулса коммунизмăн пулас çутă кунĕсемшĕн сасăлассĕ,—терĕ çамрăк суйлавçă Р. Тихонов.—Америкăпа Англи агрессорĕсен çĕнĕ вăрçă чĕртес планĕсене пурнăçлама памăпăр. Вăрçă чĕртекенсем тĕп пулччăр тесе сасăлатăп.

Совет Конституцийĕ ялавĕ айĕнче ваттисене чыс та мухтав, çамрăксене валли пур çĕрте те çул уçă. Телейлĕ те савăнăçлă пурнассĕ совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем.

Суйлав йĕркеллĕн те савăнăçлă иртрĕ.

Н. КИРИЛЛОВ.

Нумай суйлав участокĕсем çумĕнче ачасене валли пӳлĕмсем уйăрнă. Ашшĕ-амăшĕсем сасăланă вăхăтра ачасем выляса, савăнса ирттернĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çĕрпӳри 1-мĕш суйлав участокĕ çумĕнчи пӳлĕмре.

А. КОСТИН фотоӳкерчĕкĕ.

Халăх пĕрлĕхĕн демонстрацийĕ

ÇĔРПӲ. Район центрĕнче тата ялсенче вырăнти Советсене суйлас тĕлĕшпе тунă 27 участокра пуринче те суйлавсем йĕркеллĕ тата политикăллă пысăк çĕкленӳпе иртрĕç.

Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пурте пĕр кăмăлпа сасăласа, ĕççыннисем хăйсем Коммунистсен партине, халăхсен аслă çулпуçне тата учительне Сталин юлташа чун-чĕререн парăннине, халăхсен хушшинчи миршĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ырми-канми кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса пачĕç.

Рынка салинчи суйлав участокĕн центрне—колхоз клубне ирхине ирех вуншар колхозниксем пырса çитрĕç. Вĕсем хăйсене Сталинла Конституци панă правăпа усă курса пирвайхи бюллетеньсене илме кăмăл тăваççĕ. Рынка салинчи «Новая жизнь» колхоз членĕсем район Советне депутата суйлама хăйне общественăллă ĕçре палăртнă колхозницăна Дария Ивановна Федотова юлташа тата ял Совет депутатне суйлама колхозниксене, ялти интеллигенци представителĕсене 9 çынна кандидата тăратнăччĕ.

Февралĕн 22-мĕшĕнче «Новая жизнь» колхоз членĕсем, суйлава пĕр çын пек пулса хутшăнса, хăйсем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсене тулли шанăç панине кăтартрĕç. Пĕрремĕш бюллетеньсене ватă колхозник И. Сторублев колхозник илчĕ.

— Коммунистсен партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ çынсемшĕн сасăласа, — терĕ вăл, — эпир колхоз стройне малалла чечеклентерессишĕн, Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн сасăлатпăр.

Рынка салинчи участокри суйлав комиссийĕ каçхине ултă сехетре ку участокри суйлавçăсем 100 процентчĕпех суйлава хутшăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Çавăн пекех Хыркасси, Уйкас, Елаш тата ытти суйлав участокĕсенчен те ĕççыннисен патриотизмла çĕкленĕвĕ çинчĕн пĕлтерекен хыпарсем çитрĕç.

Çĕрпӳ хули урамĕсене аслă уяври пек илемлетнĕ. Пур çуртсем çинче те хĕрлĕ ялавсем, плакатсемпе лозунгсем. Ялхуçалăх техникумĕн тата вăтам шкулăн çурчĕсене электричество ламписен шерепписемпе илемлетнĕ. Ку çуртсене вырнаçнă суйлав участокĕсене ирхине 5 сехетрех çĕршер çын ытла пынă.

Икĕ участок центрĕсенче те суйлавçăсене культурăллă канма мĕн кирлине пĕтĕмпех тума тăрăшнă. Ир пуçласа чылай çĕрле пуличчен канмалли, вуламалли, ача-пăча пӳлĕмĕсем, буфетсем ĕçлерĕç. Культура çуртĕнчи духовой оркестр, техникумсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем суйлавçăсем валли концертсемпе постановкăсем лартса пачĕç.

Районти ĕççыннисем кăçалхи суйлава пысăк активлăхпа тата хĕрӳллĕ патриотизмлă туйăмпа хутшăнни — совет çыннисен никам аркатайми пĕрлĕхĕн демонстрацийĕ пулса тăчĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.)

Çухра ялĕнче

СОВЕТСКИ (Телефонпа). Уяв тумĕпе капарланнă колхоз ялĕ паян ирех вăранчĕ. Тирпейлĕ тумланнă колхозниксем 4 сехет тĕлне ушкăнĕ-ушкăнĕпе суйлав участокне пыма пуçларĕç Вĕсем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама васкаççĕ.

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Н. Ефимов юлташ шăп 6 сехетре сасăлама вăхăт çитни çинчен пĕлтерчĕ. Пуринчен малтан 65 çулхи ватă колхозник Е. Никитин суйлав бюллетенĕ илчĕ. Сасăланă хыççăн, вăл çапла каларĕ:

— Коммунистсен партийĕпе Аслă Сталин пире ырă та телейлĕ пурнăç туса пачĕç. Эпĕ халăхăн ырă малашлăхĕшĕн, тăван партишĕн сасăлатăп.

Ун хыççăн пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакан Х. Клементьева суйлав ещĕкĕ патне пычĕ. Вăл «Çамрăксен телейлĕ пурнăçĕшĕн сасăлатăп», тесе каларĕ.

Суйлав участокне пĕр гатти-сыпписĕр халăх пырса тăрать. Суйлавçăсем паян ялти паллă çынсемшĕн — район Советне депутата суйлама тăратнă А. Жидков юлташшăн, ял Советне депутата суйлама тăратнă Н. Кошелева, Ф. Семенов, М. Усеева тата ытти паллă çынсемшĕн сасăлаççĕ.

Суйлав участокĕнче ялти художествăллă пултарулăх кружокĕ спектакль лартрĕ.

Суйлав кунĕ Çухрара хаваслă иртрĕ.

Н. МАРТЫНОВ.
Н. ПУШКИН.

Политикăлла пысăк çĕкленӳпе

ЧКАЛОВСКИ. (Телефонпа). Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕ суйлав кунĕнче ирех вăранчĕ. Колхозлă аслă ял праçникри пек илемлĕ курăнать. Уйрăмах ялти çичĕ çул вĕренмелли икĕ хутлă шкул çурчĕ илемлĕ. Унта суйлав участокĕ.

Суйлав участокне ирхине 5 сехет çитнĕ тĕлех çĕр суйлавçă ытла пухăнчĕ. Унта чи малтан А. Ф Румянцевпа И. Н. Мешков суйлавçăсем—ялти ватă çынсем пычĕç. Вĕсен иккĕшĕн те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт: хăйсен сассисене депутат пулма тивĕçлĕ çынсене парасси.

6 сехет. Радио тăрăх Совет Союзĕн Гимнĕ илтĕнет. Участокри суйлав комисси председателĕ—ялти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Т. Н. Майкова юлташ, суйлавçăсене вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе саламласа, сасăлама пуçлама чĕнет.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри суйлав комиссийĕсен членĕсенчен шурă тата кăвак бюллетеньсем илеççĕ, пĕрерĕн-пĕрерĕн кабинăсене кĕреççĕ. Акă, суйлав участокне чи малтан пынă А. Ф. Румянцев юлташ суйлав ещĕкĕ патне пырать. Вăл тирпейлĕ хуçлатнă хутсене васкамасăр ещĕке ярать те çапла калать:

— Тавтапуç аслă Сталина! Ĕмĕрĕмĕр пурăн эсĕ халăхсен ырлăхĕшĕн. Эсĕ туса патăн çак тулăх пурнăçа. Эсĕ çыртăн халăхăн ылтăн кĕнекине. Сталинла Конституци панă правăпа усă курса, эпир паян хамăр влаçăн вырăнти органĕсене суйлатпăр. Хамăр тăратнă кандидатсемшĕн сасăласа, эпĕ Тăван çĕршыв хăватне ӳстерессишĕн, аслă Сталиншăн, мирлĕ те телейлĕ пурнăçшăн сасăлатăп.

А. Ф. Румянцев юлташ, ватă пулин те, колхозри пĕр ĕçрен те юлмасть, обществăллă пурнăçа активлăн хутшăнать. Вăл 1952 çулта колхоз производствинче ĕçлесе 547 ĕçкунĕ тунă.

Ун хыççăн çамрăк суйлавçă З. Михайлова сасăларĕ. Вăл кăçал пĕрремĕш хут сасăлама хутшăннăшăн савăннă.

Сасăламалли пӳлĕмрен Г. Тукмаков, А. Трифонов, Н. Куданов çамрăк суйлавçăсем савăнăçлăн тухассĕ. Виççĕшĕн те паян—пысăк савăнăç, вĕсем вунсакăр çул тултарнăскерсем, хăйсем суйлава хутшăннăшăн хĕпĕртессĕ.

Сасăламалли пӳлĕме Герасим Михеевич Михеев хăйĕн арăмĕпе—Надежда Макаровнăпа кĕрет. 83 çулхи Константин Ефимович та суйлав участокне пырса сасăларĕ.

Çĕнĕ Ахпӳрт суйлав участокĕ—районти пысăк суйлав участокĕсенчен пĕри. Унта район Советне 2 депутат, ял Советне 19 депутат суйларĕç.

Вырăнти Советсен суйлавĕ политикăллă пысăк çĕкленӳпе иртрĕ.

И. МЕШКОВ.

Самокритикăпа критикăна сарма условисем туса памалла

— Пирĕн организацире самокритикăпа аялтан килекен критика çителĕксĕр сарăлса пыраççĕ,—тесе йышăнать Çул-йĕр министерствин Канашри строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕнчи партбюро секретарĕ Г. Иванов юлташ. Вăл мĕнрен килнине эпĕ пĕлместĕп. Чăнах та, пирĕн Воробьев мастер Константиновпа Зиганшин коммунистсене критикăшăн хĕсĕрленĕ факт пулнăччĕ. Анчах эпир ку ĕçе тишкерсе тухрăмăр. Критикăна хĕснĕшĕн Воробьев мастера ĕçрен кăларнă. Урăх критикăна хĕснĕ тĕслĕхсем пурри палăрман-ха. Çапах та критика халлĕхе пирĕн патра çителĕксĕр сарăлса пырать...

Строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕнче самокритика тата уйрăмах аялтан килекен критика йăвашшăн, хăюсăр пулса пыни мĕнрен килет-ха?

Парти пухăвĕсем, уйрăмах строительствăри рабочисен пухăвĕсем, начар иртеççĕ. Çакна партбюро секретарĕ Иванов юлташ хăй те йышăнать. Нумай коммунистсем—Андреева, Стрепелев, Червяков, Ананьина, Шарыкин, Константинов, Васильева тата ыттисем те—иртнĕ çулталăк хушшинче парти пухăвĕсенче е пачах тухса каламан, е пурĕ те пĕрер хут çеç тухса каланă. Уйрăм коммунистсем часчасах пĕтĕмĕшле сăмахсем çеç тухса калаççĕ. вĕсем никама та тата нимĕншĕн те критиклемеççĕ.

Анчах самокритикăпа аялтан килекен критика кунта пачах çук тени тĕрĕс мар пулĕччĕ. Пухусенче ĕçри çитменлĕхсене вырăнлă критиклени пулать. Хăшпĕр коммунистсем парти пухăвĕсенче партбюро ĕçĕнчи çитменлĕхсене тата строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕн руководителĕсене — кантур начальникне Голованов юлташа тата главнăй инженера Болдыш юлташа час-часах хăюллăн критиклессĕ. Çапах та çак критика нумай чухне витĕмлĕх пулаймасть.

Парти пухăвĕсемпе партбюро ларăвĕсен протоколĕсене пăхса тухсан, çакна курма пулать: строительсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынăшăн, коллективра социализмлă ăмăртăва япăх ертсе пынăшăн, производствăра малта пыракансен паха опытне сарманшăн партбюрона кашни пухура тенĕ пекех критикленĕ. Партбюро обществăллă организацисене питех те начар ертсе пырать, çавна пула ĕнтĕ постройком ĕçĕсем пĕтĕмпех çӳнсе ларнă.

Стройкăри хуçалăх руководителĕсене критиклենисем те нумай пулнă. Сăмахран, ĕçе япăх организациленине, техникăпа çителĕксĕр усă курнине, строительствăри рабочисем хушшинче ĕçлеменнине, ĕç дисциплини начар пулнине тата ыттисене те коммунистсем пĕр хут çеç мар кăтартса панă.

Анчах та коммунистсем ĕçри çитменлĕхсене критиклени çине кунта кирлĕ пек пăхмаççĕ. Вĕсене никам та шута илсе пĕтĕçтермест, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çавна пула вара коммунистсем асăрхаттарнă çитменлĕхсем халĕ те пулса пыраççĕ.

Коммунистсен асăрхаттарăвĕсене хакламанни çакăнтан та лайăх курăнать: парти пухăвĕсенче коммунистсем мĕн çинчен каланине, вĕсем кама критикленине, мĕнле сĕнӳсем панине протоколсем тăрăх пĕлме май çук. 1952 çулхи майăн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ парти пухăвĕнче транспорт çинче яланах йĕркеллĕ ĕçлесси çинчен сӳтсе явнă. Пухура коммунистсем строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕн пысăк çитменлĕхĕсене уçса палăртнă, строительство ĕçĕсем прорыва кĕрсе ӳкнине тата çавăншăн кам айăплă пулнине кăтартса панă.

Парти пухăвĕн протоколĕнче вара çаксене курма çук. Унта çапла çеç çыркаласа хунă: «Максимов,—тĕпрен илсен, пирĕн çитменлĕхсем çинчен, вĕсене пĕтермелли майсем çинчен чарăнса тăчĕ»; «Белогривов — правительство кăтартса панă мĕнпур ыйтусем тăрăх пирĕн конкретлă ĕçсем туса ирттерме палăртса хумаллине кăтартса пачĕ» т. ыт. те.

Çапла вара, коммунистсем парти пухăвĕнче çитменлĕхсене критиклесе тухса каланисем ахалех пулнă, вĕсенчен ниçта та нимĕнле йĕр те юлман. Строительство ĕçĕсен руководителĕсем коммунистсем асăрхаттарнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Аялтан килекен критика ӳссе тата сарăлса пытăр тесен, ун валли тивĕçлĕ условисем тумалла, вăл хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса лармалла мар. Критикăна сарса пырас ĕçе кашни коммунист активлă хутшăнтăр тесен, вăл тĕрĕс критикленисене пирĕн руководительсем кăмăллăн йышăнасса, палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерессе шанса тăмалла гăвас пулать. Анчах та строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕнчи партбюро тата строительство руководителĕсем çакăн çинчен маннă. Кунта коммунистсем хăйсем тĕрĕс критикленисене руководительсем хута кĕрессе, палăртнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерессе шанма пăрахнă, мĕншĕн тесен парти пухăвĕсенче критикленисем яланах хут çинче çеç юлаççĕ, час-часах тата вĕсене çырса хума та тăрăшмаççĕ. Юлашки вăхăтра коммунистсем парти пухăвĕсенче активлă тухса каламаннин, самокритикăпа аялтан килекен критика кирлĕ пек сарăлса пыманнин сăлтавĕ çакăнта пулать те ĕнтĕ.

Парти пухăвĕн решенийĕ — коммунистсен коллективлăн туса хатĕрленĕ ĕç. Парти пухăвĕн решенийĕ—кашни коммунистшăн закон, парторганизаци çитес вăхăтра туса ирттермелли ĕçсен программи пулса тăрать. Кашни решение коммунистсен сĕнĕвĕсене тата вĕсен критикăллă асăрхаттарăвĕсене шута илсе çырса хатĕрлессĕ, вăл парторганизацин сывăх вăхăтри задачисене туллин палăртса тăрать. Çавăнпа та партбюро коммунистсен пухăвĕ йышăннă кашни решение вăхăтра пурнăçа кĕртме тата ăна мĕнле пурнăçласа пынине куллен тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ.

Строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕнчи партбюро пуху решенийĕсене вăхăтра пурнăçласа пырас тĕлĕшпе çаврăнăçуллă ĕçлемест. Парти пухăвĕсенче стройкăри партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе паха решенисем сахал мар йышăннă. Анчах та вĕсенчен нумайăшĕ хут çинче çеç тăрса юлнă. 1952 çулхи майăн 22-мĕшĕнче йышăннă решенире парти пухăвĕ строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕн начальникне Голованов коммуниста правительство постановленине тата строительство программине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе организациллĕ-техникăллă ĕçсен планне туса хатĕрлеме хушса хăварнă. Парти пухăвĕ парторганизаци секретарьне строительсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатма, рабочисем валли лекцисем, докладсем, калаçусем час-часах ирттерме, стена хаçачĕпе боевой листоксем тăтăшах кăларса тăрас тата производствăра малта пыракансен опытне сарас ĕçе организацилеме хушса хăварнă. Анчах та çав решение папка хушшине хунă та лăпланнă. Çавна пула вара парти пухăвĕн решенийĕнчи асăннă пунктсене пĕрне те пурнăçа кĕртмен.

Парторганизаци секретарĕ пулнă Мазуров юлташ хăйĕн ĕçĕ çине ответсăр пăхнă. Вăл парти пухăвĕсен протоколĕсене нумайăшне йĕркеллĕ çырса пыман. Çав пухусенче питех те кирлĕ ыйтусене сӳтсе явнă, коммунистсем хаклă сĕнӳсем нумай панă. Сăмахран, июлĕн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухура строительство ĕçĕсен уйăхри планне мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе явнă. Коммунистсем производство планне пурнăçлас ĕç япăх пыни ĕçе начар организациленинчен, техникăпа çителĕксĕр усă курнинчен, социализмлă ăмăртăва сарса яманнинчен, прорабсемпе мастерсем ĕçе начар ертсе пынинчен килнине кăтартса панă. Пуху производство планне пурнăçласа çитерме май паракан ĕçсене туса ирттерме палăртса решени йышăннă. Анчах çав пуху протоколĕпе решенине паян кунччен кирлĕ пек çырса йĕркелемен. Вĕсене пуху пынă вăхăтра уйрăм хут таткисем çине кăна çыркаласа хунă, вĕсем тăрăх коммунистсен сĕнĕвĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслеме те май çук.

1952 çулхи июнĕн 18-мĕшĕпе 27-мĕшĕнче, июлĕн 18-мĕшĕнче, сентябрĕн 5-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухусен протоколĕсене те çырса йĕркелемен. Ку пухусенче коммунистсем панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çапла вара, коммунистсен пуçарулăхне, критикăна сарса ярас ĕçе пĕтерсе пынă, парторганизацире çитменлĕхсемпе килĕшсе, лăпланса ларас йăла туса хунă.

Коммунистсем çитменлĕхсене критиклесе тухса каланисене хакламаннине, решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăманнине пула партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕç япăхса кайнă. Партбюро строительсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне питĕ начар туса пырать. Лекцисем, докладсем, политикăллă калаçусем сайра хутра çеç ирттерессĕ. Юлашки вăхăтра строительство участокĕсенче калаçусем пачах ирттермессĕ. Стройкăра наглядная агитаци çук, стена хаçачĕпе боевой листоксем кăлармассĕ. Складра репродукторсем темĕн чухлех пулин те, рабочисен общежитийĕсене радио кĕртмен.

Коммунистсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес ĕç питех те çителĕксĕр пырать. Кружоксенче вĕренекенсем занятисене 40—50 процентран ытла çӳремессĕ. Гришанова юлташ пропагандист пулса ĕçлекен кружокра январĕн 27-мĕшĕнче, вĕренекенсем пустарăнман пирки, заняти ирттереймен. Строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕн начальникĕ Голованов, главнăй инженер Болдыш, главнăй бухгалтер Шарыкин, кадрсен пайĕн начальникĕ Мазуров марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăл тунă. Анчах вĕсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренне ятпа витĕнсе çеç пурăнассĕ, хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе нимĕн те тумассĕ. Коммунистсем марксизм-ленинизм теорине вĕренес ĕç япăх пырать пулин те, çакăн çинчен партбюро ларăвĕнче пĕрре те сӳтсе явман.

Партбюро строительствăра ĕçлекен рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пымасть, постройком вара çак ответлă ĕçрен пачах пăрăннă. Кунта уйрăм рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлессине сарса яман, производствăра малта пыракансен опытне сарас ĕçе организацилемен. Стройкăра стахановецсемпе ударниксем миçе çын пулнине никам та калаймасть, мĕншĕн тесен вĕсене шута илекен çук. 1952 çулхи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене кунта паян кунччен палăртман. Строительствăра çамрăк рабочисем нумай, вĕсен пĕлĕвĕсене куллен ӳстерсе пыма кирлĕ пулин те, кадрсен техникăллă вĕренĕвне организацилемен.

Çак çитменлĕхсене пула ĕнтĕ строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕ производство планне ăнăçлă пурнăçласа пыраймасть. Строительство ĕçĕсен 1952 çулхи планне пурĕ те 64,4 процент çеç тултарнă. Пĕлтĕр кунти строительсен коллективĕ вагонсем юсакан заводри рабочисем валли пурăнмалли çуртсем 3.000 тăваткал метр туса парас вырăнне 1.512 тăваткал метр çеç туса панă. Вăтам шкул çуртне вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕлех туса пĕтермелле пулнă, анчах ăна халĕ те туса пĕтермен-ха. Çавăн пекех вокзал тумалли плана та тултарайман.

Партин XIX-мĕш съезчĕ çĕршыв умне лартнă задачăсем партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене малалла вăйлатса пыма, самокритикăна тата аялтан килекен критикăна сарса яма, парти ĕçĕшĕн коммунистсен ответлăхне ӳстерме, партипе государство дисциплинине пур майсемпе те çирĕплетсе пыма хушаççĕ. Строительствăпа монтаж ĕçĕсен кантурĕнчи парторганизаци хăйĕн ĕçĕсене çак енĕпе урăхлатса çĕнетмелле. Самокритикăна тата аялтан килекен критикăна пур майсемпе те сарса пырса, парторганизаци ĕçне çĕнĕ задачăсен çӳлĕшне çĕклесе, строительсен коллективне 1953 çулхи строительство ĕçĕсен планне ăнăçлă тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле.

И. ЖАДЕЦКИЙ.

Комсомол организацийĕсене ертсе пырасси

Парти ертсе пынипе комсомол пирĕн совет çамрăкĕсене Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-хăватпа кĕрешме вĕрентсе пырать, коммунистсен партийĕ тавра пĕтĕçтерсе тăрать, хамăр çĕршыв-ра коммунизмлă общество тума çамрăксене мобилизацилесе пырать.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Уставĕнче çапла каланă:

«ВЛКСМ пĕтĕм государство тата хуçалăх строительствинче партин активлă помощникĕ пулса тăрать. Комсомол организацийĕсем социализм строительствин пур участокĕсенче те, уйрăмах партин пуçламăш организацийĕсем çук çĕрте, парти директивисене ĕçре активлăн пурнăçа кĕртсе пыракансем пулмалла».

Пирĕн парти çĕршыв умне кăларса тăратнă задачăсене комсомол организацийĕсем ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарччăр тесен, çамрăксене вĕрентсе ӳстерес ĕçе парти организацийĕсен куллен ертсе пымалла, комсомолăн кĕрешӳри пултарулăхне ӳстермелле.

Парти енчен ертсе пыни комсомол ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнать тата чи кирлĕ пулса тăрать. Парти организацийĕсем куллен ертсе пымасан, комсомол хăйĕн тĕп задачине—рабочисемпе хресчен çамрăкĕсене совет патриотизмĕпе интернационализм майлă, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн паттăррăн кĕрешекенсем пулма воспитани парас задачăна пурнăçлама пултараймасть.

Анчах çакна пуçламăш парторганизацисем пурте асра тытаççĕ теме çук-ха.

Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçре парторганизацисен ответлăхне ӳстерес тесе, КПСС райкомĕн бюровĕ комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен политикăллă вĕренĕвĕ мĕнле пыни çинчен сӳтсе яврĕ. Райком бюровĕ ку ĕçри ситменлĕхсене пĕтермелли, комсомол вĕренĕвне лайăхлатмалли майсене палăртрĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕсене ку ĕçшĕн вĕсем ответлă пулса тăнине кăтартса пачĕ.

КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ тата ВЛКСМ райкомĕ пуçламăш комсомол организацийĕсене практикăллă пулăшу пама хăйсен представителĕсене ячĕç. Вĕсем кружоксемпе политшкулсен занятийĕсенче пулчĕç, комсомол вĕренĕвне лайăхлатасси çинчен парти пухăвĕсенче сӳтсе яврĕç. Çакăн хыççăн пуçламăш парторганизаци секретарĕсем комсомол пурнăçĕпе тарăнраххăн интересленме тытăнчĕç.

Анчах уйрăм парторганизаци секретарĕсем çӳлте асăннă решенирен тивĕçлĕ вывод тумарĕç-ха. «Новая жизнь», «Красный пахарь», «Вперед» тата Пренешри «1-ое Мая» колхозсенчи, больницăри, промкомбинатри парторганизаци секретарĕсем комсомолецсемпе çамрăксен политикăллă вĕренĕвне пачах ертсе пымаççĕ, комсомол пурнăçĕпе пачах интересленмеççĕ. Парти енчен тĕрĕслесе тăман пирки, çав комсомол организацийĕсенче кружок занятийĕсем идея тĕлĕшĕнчен ситеlĕксĕр ирттеççĕ, вĕренекенсем занятисене час-часах сиктерсе çӳреççĕ, çавна пула вĕренекенсен пĕлĕвĕ те кирлĕ пек ӳсмест.

Районта марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен комсомолецсен ĕçне тĕрĕслесси çителĕксĕр пулса пырать. Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсенчен 5 комсомолецăн кăна план пур. ВЛКСМ райкомĕ харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекцисемпе докладсем сайра ирттерет, вĕсемпе уйрăммăн каласса, кам мĕнле вĕреннине тĕрĕслемест.

ВЛКСМ райкомĕ пропагандист кадрĕсене те тупса çитермен. Çавăнпа хăшпĕр кружоксенче занятисем пулмаççĕ. «Вперед» колхозра Лаптенкова пропагандист, хăйне ВЛКСМ райкомĕ комсомол вĕренĕвĕнче кружока ертсе пыма уйăрни çинчен пĕлтермен пирки, ку таранччен те занятисем ирттерме тытăнман. Ку тепĕр енчен пуçламăш парторганизаци секретарĕ Харитонов юлташ комсомол пурнăçĕпе, комсомол вĕренĕвĕпе интересленменнинчен те килнĕ.

ВЛКСМ райкомĕ пропагандистсемпе семинарсем сайра-хутра ирттерет, уйрăм пропагандистсем ку таранччен те вĕренӳ программи илеймен.

Çамрăксене тĕрĕс воспитани памалли тепĕр лайăх май вăл культурăллă-массăллă ĕçе тĕрĕс ертсе пыни, çамрăксене пушă вăхăта культурăллă та усăллă ирттерме организацилени пулать. Ку тĕлĕшпе сĕтел-пукан комбинатĕнчи партбюрона лайăх енчен асăнмалла. Вăл çамрăк рабочисемпе ĕçлессине нихăçан та манăçа хăвармасть. Культурăллă пĕтĕм ĕçе клубра ирттереççĕ. Кунта час-часах çамрăксем валли лекцисемпе докладсем пулаççĕ, çамрăксен каçĕсене ирттереççĕ. Клуб çумĕнче пысăк библиотека пур. Вăл тăтăшах вулакансен конференцине ирттерет. Хальхи вăхăтра унта 430 çамрăк вулакан шутланать. Вĕсем кашниех çулталăк хушшинче 25—30 кĕнеке илсе вуланă. Клуб çумĕнче художествăллă пултарулăх коллективĕ ĕçлет. Пултарулăх коллективĕ искусствăна халăх хушшине сарас, халăх массине художествăллă воспитани парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăвать.

Юлашки вăхăтра «Чăвашвăрман» трестне кĕрекен вăрманпромхозри партбюро та çамрăксем хушшинче ĕçлес ыйтăва хаклама тытăнчĕ. Кунта çамрăксем валли нумаях пулмасть лайăх клуб турĕç.

Парти организацийĕ комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче çакăн пек ĕçленине пула çамрăк рабочисен ĕçри дисциплини çирĕпленет, вĕсен ĕç тухăçлăхĕ те ӳсет.

Анчах ВЛКСМ райкомĕ сĕтел-пукан комбинатĕнчи, вăрманпромхозри, «Комбинат», «Заря», «Родина» тата ытти колхозсенчи комсомол организацийĕсен паха опычĕсене пĕтĕçтерсе, ыттисем хушшине сарассишĕн тăрăшмасть. Пуçламăш парторганизацисем те пухура е партбюро ларăвĕсенче комсомол организаци секретарĕсен отчечĕсене итленипе кăна чарăнса тăраççĕ.

Комсомолăн облаçри конференцийĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме комсомолецсене ытларах уйăрма хушса хăварчĕ. Çак решение пурнăçлас тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме 140 комсомолеца яма йышăннăччĕ. Паянхи куна фермăсенче 47 комсомолец кăна ĕçлет.

Комсомол организацийĕсен ĕçри ăнăçлăхĕ пуçламăш парторганизацисемпе ВЛКСМ райкомĕ пленум решенийĕсене çирĕп пурнăçласа пынинчен килет. Пленум йышăннă решенисем пирĕн парти комсомол умне лартакан пĕтĕмĕшле задачăсенчен тухса тăраççĕ, вĕсем комсомол организацийĕсене хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ ӳсĕмсем тумалли майсене кăтартса параççĕ.

В. СИМСОВ,
КПСС Çĕмĕрле райкомĕн партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕн заведующийĕ.

Шкул ачисене тĕрĕс çырма тата тĕрĕс калаçма вĕрентер

Вĕренекенсен чĕлхе культурлăхне аталантарса пырасси — шкулсен ответлă та пархатарлă ĕçĕсенчен пĕри. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ учительсен коллективĕ чĕлхе тасалăхĕшĕн çине тăрса ĕçленинчен килет. Вĕренекенсен чĕлхе тасалăхĕшĕн пур учительсен те тăрăшас пулать.

Вĕренекенсем сăмахсене пăсса калаçасси чи малтанах çемьере пуçланать. Час-часах эпир, ӳссе çитнĕ çынсем, каласнă чухне юрăхсăр сăмахсемпе усă куратпăр, пĕчĕк ачасем те вара хăйсен калаçăвĕнче çав сăмахсемпе калаçма хăнăхса пыраççĕ. Çавăнпа та ача шкула пырсан чи малтанхи кунсенчех вăл вырăнлă мар сăмахсемпе калаçнине хирĕç кĕрешме тытăнас пулать.

Вĕренекенсем тĕрĕс калаçма вĕренесси учительсем илемлĕ тата литературăри сăмахсемпе усă курса калаçнинчен килнине манмалла мар. Учитель чĕлхи культурăллă чĕлхе пулмалла, унăн калаçăвĕнче те, çырăвĕнче те вырăнсăр сăмахсем пулмалла мар.

Кашни учитель, вăл мĕнле класенче е мĕнле предметсем вĕрентнине пăхмасăр, класра тĕрĕс, таса сăмахсемпе калаçмалла, предложенири сăмахсен çыхăнăвне пăсмалла мар. Анчах та çакна пур учительсем те асра тытмаççĕ, хăшпĕрисем вĕренекенсем тĕрĕс калаçманнишĕн хăйсене пысăк айăплă тесе шутламаççĕ, çавна пула вĕренекенсен калаçăвĕ çине е пачах та пăхмаççĕ, е питех те çителĕксĕр пăхаççĕ.

Тĕслĕхсем илсе кăтартар. Чăваш чĕлхи урокĕнче I-мĕш класра вĕренекенсемпе учительница хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртнине илтмелле пулчĕ.

— Эпĕр песмаях ачасемпе киле пĕрле каятпăр, — тет Ванюш.

— Эпĕр те çам пекех, — ответлет тепри.

— Вăт лайăх, эсир те эппин Ванюшсем пекех тăватăр, — ответлет учительница.

— Паян киле çитсен эпĕ атте патне конюха каятăп, пирĕн унта пит хитре тихасем пур, — тесе савăнса калаçать Петя.

— Син анчах-им, пин аттен те хитре тихасем нумай, — хирĕçлет Илюш.

Учительница ачасем çапла калаçни çине нимĕн чухлĕ те çаврăнса пăхмарĕ, вĕсен сăмахĕсене тӳрлетмерĕ, ачасене мĕнле калаççан тĕрĕс пулнине кăтартса памарĕ, хăй те тĕрĕс мар сăмахсемпе калаçса урок ирттерчĕ.

Хăшпĕр учительсем урокра хăйсем те вĕçĕмсĕрех «ну-ка», «эхе», «так значит», «стало быть», «иййе», «ну-с» тата ытти çакăн пек сăмахсемпе усă кураççĕ. Вара тепĕр чухне вĕренекенсем, урок итлес вырăнне, учитель 45 минут хушшинче миçе хутчен çӳлте кăтартнă йышши сăмахсене каланине шутласа лараççĕ.

Урокра «Польшăсене Мускавран 1654 çулта хăваласа янă», «Михаил Романов патша тăвар çине пысăк налог хунă», «Ним те çок палли лартатпăр», «Кислород тимĕрсене пĕтерет тутăхпа» тата ытти çакăн йышши сăмах çаврăнăшĕсемпе усă куракан учительсем, паллах, вĕренекенсен калаçу чĕлхипе вĕсен çыру чĕлхине пăсма çеç «пулăшаççĕ».

Хăшпĕр учительсем уроксенче вĕренекенсене вырăс чĕлхине «аталантаратпăр» тесе çапла калаçаççĕ: «...Чтобы найти кислород, эсир куратăр мĕн-мĕн иллиние. У нас выйдет или нет, но туса пăхар-ха. Если не выйдет опыт, то придется ăна лайăхрах туса пăхма. Унта (?) малтанах хура двуокисе яма хушмасть, но мы попробуем сначала же ăна яма, бертолетова тăварне нагревать тăвичченех, иначе опять придется тепĕр хут кăларса ямалла пулать...» Çак калаçу ĕнтĕ, чăннипе илсен, сăмахсен çăрăлчăкĕ çеç пулса тăрать, вăл чăваш чĕлхине те, вырăс чĕлхине те вĕренме пулăшма пултарайманни пуриншĕн те паллă.

Вырăс е чăваш чĕлхине вĕрентмен учительсенчен нумайăшĕ вĕренекенсене тĕрĕс калаçма е çырма вĕрентесси пирĕн ĕç мар, теççĕ. Çавăн пирки вĕсем хăйсен предмечĕсемпе ачасем çырнă ĕçсенчи йăнăшсене тӳрлетмеççĕ. Çакна пула ĕнтĕ пирĕн вĕренекенсем «по матиматике» тесе çырнă тетрадьсене вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех йăтса çӳреççĕ те, вĕсем «промогульник, куатрат» тесе çыраççĕ. Çапла, пĕррехинче, пĕр класри вĕренекенсен математикăпа çырнă тетрачĕсене пăхса тухнă май, çакăн пек çырнисемпе тĕл пулмалла пулчĕ: «Решени. Дуга АС висĕнет кĕтес АВС-пе, хутлас икĕ хут, тата мĕн пулни çумне хушас дуга ЕДГ», «ăна доказать тăвас пулсан треугольник АВС-пе, А, В, С, треугольниксем илетпĕр» т. ыт. те. Учителе çак йăнăшсем нимĕн чухлĕ те хумхантарман, вăл вĕсене палăртма та шутламан. «Шухăшĕ тĕрĕс пулсан, сăмахсене тĕрĕс çырмашăн эпир айăплă мар, чĕлхе вĕрентекен учительсем айăплă» текен учительсем чăнахах та математика е урăх предмет вĕрентнĕ чухне вĕренекенсен чĕлхе тасалăхĕ çине пăхмаççĕ çеç мар, вĕсем хăйсем тĕрĕс мар калаçма вĕрентеççĕ.

Ют çĕршыв чĕлхине вĕрентекен учительсен чĕлхе тасалăхĕшĕн кĕрешес ĕçри ответлăхĕ уйрăмах пысăк, мĕншĕн тесен вĕренекенсем ют чĕлхерен вырăс чĕлхи çине куçарнă статьясен содержанийĕсене çырса хураççĕ е каласа параççĕ. Куçарса çырнисене учитель тĕрĕслесе пымасан, вĕренекенсем питех те нумай тĕрлĕ йăнăшсем тăваççĕ. Акă пĕр тĕслĕх. 6-мĕш класра вĕренекен нимĕç чĕлхинчен куçарса çапла çырнă:

...Оно новый часы. Отец сидеть бисьменная стола и читать газета. Гриша делать задача... Платье мать серый, блузка дочь светлая голубая...»

Çакăн пек куçарнисем тата ытти тетрадьсем çинче те тăтăшах тĕл пулчĕç, учительница вĕренекенсен тетрачĕсене тытса курман. Йăнăшсене мĕншĕн тӳрлетместĕр тесе ыйтсан, вăл тӳрех çапла каларĕ: «Вырăс чĕлхипе тĕрĕс çырма эпĕ вĕрентместĕп, кам çав чĕлхене вĕрентет, унăн тĕрĕслемелле», терĕ.

Эпир вĕренекенсен калаçу е çыру чĕлхинче юрăхсăр сăмахсем пуррине тата вĕсене тĕрĕс калаçма вĕрентес ĕçри хăшпĕр çитменлĕхсене палăртрăмăр. Асăннă çитменлĕхсем вĕсем шкулта ĕçлекен учительсем чĕлхе культурлăхĕпе тасалăхĕшĕн пыракан кĕрешĕве пурте, пĕр çын пек пулса, хутшăнса ĕçлеменнипе пулаççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерни ачасене чĕлхене вĕрентес ĕçе лайăхлатма пулăшĕччĕ.

Х. АЛЕКСАНДРОВ,
Красноармейски районĕнчи Именкассинчи вăтам шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ.

Пĕчĕк фельетон

Хăнасем килеймерĕç...

Шавлать студентсен пысăк аудиторийĕ. Ниçта ларма-тăма та вырăн çук. Тăватшарăн лармалли парттăсем хушшине студентсем ултшарăн та çичшерĕн ларса тухнă. Вырăнсăр тăрса юлнисем алăк патĕнче кĕпĕрленсе тăраççĕ. Тĕпелте анчах, хăмачпа витнĕ трибунăпа сĕтел умĕнче анчах çич-сакăр тенкел пушă ларать.

— Час пуçланать-ши? — илтĕне-илтĕне каять хушăран. Ответ вырăнне аудиторире шав кăна пĕр кĕтесрен тепĕр кĕтесе куçса тăрать.

Кама кĕтеççĕ Чăвашсен государство педагогика институтĕнче вĕренекен студентсем?

Ку ыйту çине 3-мĕш хутра пĕр эрне хушши çакăнса тăнă пĕлтерӳ ответлет. Унта çапла çырнă:

«Паян, 1952 çулти ноябрĕн пĕрремĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, 405-мĕш аудиторире литература каçĕ пулать. Семен Эльгер, Яков Ухсай, Уйăп Мишши тата ытти поэтсем те килеççĕ.

Программăра:

1. Институтри çамрăк авторсен произведенийĕсене сӳтсе явасси. (Докладчикĕ А. Алга).

2. Поэтсемпе писательсем хăйсен сăввисемпе калавĕсене вуласа параççĕ».

Акă сакăр сехет те çитрĕ, анчах та 405-мĕш аудиторири трибунăпа тенкелсем çаплипех пушă-ха. Вăхăт 9-мĕш сехет çине куçсан, трибуна умне чăваш литературин кружокне ертсе пыраканĕ А. Горшков студент тухса тăрать. «Пуçланать иккен!» — шухăшласа илчĕç пухăннисем.

— Студент юлташсем, литература каçĕ паян пулмасть, — илтĕнсе каять трибуна çинчен.

Çакăн хыççăн аудитори каллех кĕрлеме тытăнать:

— Мĕншĕн?!

— Мĕн пирки?!

А. Горшков лăпкăн çеç тавăрса хурать:

— Александр Алга ерçмест, вăхăчĕ çук. Литература каçĕ ноябрĕн 7-мĕшĕ ирттсен тин пулать.

Кăмăлсăр пулнă студентсем килĕсене саланаççĕ, тепрехинче пулатех ĕнтĕ, теççĕ вĕсем.

Чăнах та, Октябрь уявĕ хыççăн çав пĕлтерĕве каллех тухса çакнă иккен, унăн числине кăна улăштарнă, «Ноябрĕн 1-мĕшĕ» вырăнне «ноябрĕн 13-мĕшĕ» тенĕ. Кĕтнĕ кун часах çитет. Каç та пулать. Сехет çиччĕ çапать, саккăр та, тăххăр та... Йышлăн пухăннă студентсен умне малтанхи пекех А. Горшков тухса тăрать те çапла пĕлтерет:

— Паян литература каçĕ пулмасть. А. Алга килмерĕ.

— Мĕнле капла?

А. Горшков хулпуççисене хуллен пăркаласа илет те трибуна çинчен анса каять.

Тепĕр уйăхран каллех çав пĕлтерĕвех курăнса кайрĕ. Литература каçĕ декабрĕн 12-мĕшĕнче пулмалла иккен, анчах та ку хальхинче никамах та хаваслантармарĕ, мĕншĕн тесен литература каçĕ çаплах пулас çуккине пурте ăнланса илчĕç ĕнтĕ. Чăнах та, ним хаваsланмалли те пулмарĕ: докладчик ку хутра та килеймерĕ...

Акă декабрь те иртрĕ, 1953 çул пуçланчĕ, январь те иртрĕ, февраль те пуçланчĕ. Студентсем каникула кайса килчĕç, иккĕмĕш семестр лекцийĕсене итлеме тытăнчĕç, тĕрлĕ кружоксем хăйсен ĕçĕсене пуçласа ячĕç.

Литература кружокĕ те «ĕçе» пикенчĕ. Студентсен куçне каллех пысăк саспаллисемпе çырнă пĕлтерӳ курăнса кайрĕ: литература каçĕ февралĕн 13-мĕшĕнче пулать иккен, докладчикĕ те А. Алга поэтах иккен. Эпир шалтах тĕлĕнтĕмĕр: çав пĕлтерӳ виçĕ хутчен кăларса çакнă пĕлтерĕвех иккен. Халĕ вăл тăваттăмĕш хут çакăнса тăрать ĕнтĕ! Улшăнăвĕ те çакă çеç: ытти писательсемпе пĕрле А. Эсхельпе В. Давыдов поэтсем килеççĕ иккен.

Хальхинче, чăнах та, кĕтнĕ хăнасем килчĕç, анчах 405-мĕш аудитори пуш-пушах тăчĕ, мĕншĕн тесен студентсем патне Чăвашсен академи театрĕн артисчĕсем килнĕ, тепĕр енчен, литература каçĕ пулассине никам та ĕненмен.

Çакăн хыççăн литература кружокне ертсе пыракансемпе институт дирекцийĕнче литература каçне февралĕн 17-мĕшĕнче ирттерме йышăнаççĕ. А. Горшков хăнасене палăртнă вăхăта килме телефонпа чĕнет.

Акă февралĕн 17-мĕшĕ çитет. Чăвашсен государство педагогика институтĕнче литература каçĕ чăн-чăнах пуласси студентсене хĕпĕртеттерет. Институт дирекцийĕ те план тăрăх пулмалли пухусемпе ларусене февралĕн 18-мĕшне куçарать. Пурте пĕлеççĕ: литература каçĕ пулмалла, писательсем килмелле.

Çичĕ сехет тĕлне 405-мĕш аудиторие студентсем каллех çапса хĕснĕ пек пуçтарăнаççĕ. Сехет йĕпписьем саккăр çине куçаççĕ, хăвăрттăн тăххăр еннелле шăваççĕ. Пирĕн хаклă хăнасем çаплах çук-ха... А. Горшков чупкаласа çӳрет, вăл пĕр вĕçĕмсĕр Пичет çуртне телефонпа шăнкăртаттарать. «Кунта никам та çук, — илтĕнет Пичет çуртĕнчен, — пурте кайса пĕтнĕ».

Студентсем кăмăлсăр пулни çинчен çырса кăтартма та хĕн, литература каçĕ çаплах пулаймарĕ, пирĕн пата А. Алга докладчикпа ытти хаклă хăнасем çаплах килеймерĕç...

Килĕç-ши вĕсем хăçан та пулин?

Ю. СКВОРЦОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Советски районĕнчи «Прогресс» колхозра обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленни, выльăхсене кирлĕ пек тăрантарса усраманни, лашасене уйрăм ездовойсем çумне çирĕплетсе паманни, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен работниксене кирлĕ условисем туса паманни, работниксем улшăнсах тăни çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва тĕрĕслеме Советски районĕн ялхуçалăх пайне янăччĕ.

Ялхуçалăх пайĕ çырура асăннисене колхоз правленийĕн, Мăн Чураш ял Совет исполкомĕн тата район Совет исполкомĕн ларăвĕсенче сӳтсе явни, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Халĕ выльăх витисем патне шыв илсе пыма тытăннă, вутă кӳрсе панă тата ытти ĕçсене те туса ирттернĕ. Район Совечĕн исполкомĕ ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникне Михайлов юлташа тата Мăн Чурашри зоотехникăпа ветеринари пунктĕнчи работниксене колхоза пулăшса тăма хушнă.

Çĕнĕ Польшăра

ЕЛЕКХИ ОКРАИНАСЕНЕ ИНДУСТРИАЛИЗАЦИЛЕНИ

Буржуаллă-помещикла Польшăра Варшăваран хĕвелтухăçнерехре выртакан çĕрсене окраина тесе шутланă. Промышленность предприятийĕсем мĕнле вырнаçнине кăтартакан карттă çинче вĕсене Б саспаллипе паллă тунă. Çакă вăл унта пысăк заводсемпе фабрикăсем кăна мар, паллăрах нимĕнле предприяти те çуккине пĕлтернĕ.

Социализмăн никĕсне тумалли ултă çуллăх плана ăнăçлă пурнăçласа пынине пула Люблин, Жешув тата Варшава воеводствисенче чылай промышленность предприятийĕсем туса лартнă, халĕ те тăваççĕ. Вĕсем тахçан ĕлĕк кая юлнă окраинăсенчи экономикăна палламалла мар улăштараççĕ.

«Вежбица хăвăрт çĕкленчĕ, — тесе çырать «Трибуна люду» хаçат Радом хули районĕнче нумай пулмасть туса пĕтернĕ цемент завочĕ çинчен. — Вежбица — Польшăри рабочисен, техниксемпе инженерсен творчествăллă ĕçĕн результачĕ. Вăл Совет Союзĕ тăванла пулăшнине тата тепĕр хут çирĕплетсе парать». Вежбица валли техникăллă оборудование пирĕн çĕршыва пĕтĕмпех Совет Союзĕ панă, тесе палăртать хаçат, заводра чи çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă.

«Темиçе вунă çул каярах кăна, — тесе çырать «Трибуна люду», — Люблин çывăхĕнчи çĕрсем экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă районсен шутĕнче пулнă. Унта нимĕн те улшăнман, ĕçсĕр юлнисен шучĕ çултан-çул ӳссе пынă». Халĕ çав район пĕтĕмпех улшăнса çĕнелнĕ. Люблинра пысăк промышленность предприятийĕсем, вăл шутра грузсем турттаракан автомобильсем тăвакан пысăк завод туса лартнă.

Хаçат автомобиль заводĕнчи тата хулари ытти предприятисенчи рабочисем валли тунă поселок çинчен каласа парать. «Çулталăк каярах кăна кунта тырпул хумханса ларнă, — тесе çырать «Трибуна люду». — Кунта, Свидник ятлă чухăн ялта, 1951 çулхи кĕркунне рабочисен илемлĕ хулине тума малтанхи никĕссене хывнă».

Халĕ, тесе çырать хаçат малалла, «Люблин çывăхĕнчи тулă уй-хирĕсем хушшинче хула ӳссе ларчĕ. Люблинра пурăнакансем ун пек хулана ĕлĕкрех тĕлĕкре те курман».

Жешув çывăхĕнчи Сталева Воля металлурги завочĕ ӳсет, çĕнелсе пырать, çултан-çул ытларах продукци туса кăларать:

«Виçĕ çуллăх план, унтан социализмăн никĕсне тумалли ултă çуллăх план, — тесе çырать юлашкинчен «Трибуна люду», — Польшăна экономика тĕлĕшĕнчен икĕ пая уйăрса тăракан чикĕне ĕмĕрлĕхех пĕтерчĕç. Çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те çĕнĕ предприятисем ӳсеççĕ, киввисене улăштарса çĕнетеççĕ».

ÇУТÇАНТАЛĂКА УРĂХЛАТСА ÇĔНЕТМЕЛЛИ ПЛАН

Социализмăн никĕсĕсене тумалли ултă çуллăх плана тултарнă хыççăн Польшăри ĕçсыннисем çĕнĕ пилĕк çуллăх плана пурнăçлама тытăнаççĕ. Нациллĕ фронтăн программи тăрăх, вăл çутçанталăка урăхлатса çĕнетессипе çыхăннă питех те пысăк ĕçсен планĕ пулса тăрать.

Пилĕкçуллăх хушшинче çĕршывра калама çук пысăк ĕçсем тума палăртнă. Польшăри чи пысăк юханшывсенчен пĕрин çинче — Висла çинче — пиншер километр хушши, Силезирен Балтика тинĕсне çитиччен пăрахутсем çӳремелле тăваççĕ. «Трибуна люду» çырнă тăрăх, Висла çинче тăвакан гидростанцисен пĕтĕм хăвачĕ миллион киловата яхăн пулать. Çав станцисем халăх хуçалăхне çулсерен 5—6 миллиард киловатт-сехете яхăн электроэнерги парса тăмалла. Висла шывĕпе 100—150 пин гектар çĕре шăварса тăма палăртнă. Висланă Одерăн тури пайĕпе пĕрлештерекен Силези каналĕ, çавăн пекех Буг юханшывĕ çинче гидротехникăллă пысăк ĕçсем тумалла.

Хаçат нумай пулмасть Варшавăра Наука академийĕ çумĕнчи Шыв хуçалăхĕн ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн ларăвĕ пулни çинчен пĕлтерет. Ку ларура ученăйсем çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли генеральнăй план туса хатĕрлеме тытăннă май пурнăçламалли ĕçсем çинчен сӳтсе явнă.

Ларура пулнисем генеральнăй плана туса хатĕрленĕ чухне Совет çĕршывĕнчи опытпа, коммунизмăн аслă стройкисен опычĕпе анлăрах усă курма кирлине палăртнă.

«Аслă Совет Союзĕн çулĕпе пырса, хамăр çĕршывăн çутçанталăкне улăштарса çĕнетсе, питех те пысăк водохранилищĕсем, гидроэлектростанцисем, каналсем туса, — тесе çырать хаçат, — эпир хамăрăн çĕршыв ĕмĕрсем хушши кая юлнине пĕтеретпĕр, индустрие тата ялхуçалăхне тата ытларах аталантаратпăр, пирĕн халăхăн пурнăçне лайăхлатса пыратпăр, унăн культурăллă шайне ӳстеретпĕр».

АСЛĂ ИДЕЙĂСЕН ÇУТТИ

И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенине, аслă çулпуç КПСС XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха тата съезд материалĕсене Польшăра пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕ идеологиллĕ пĕтĕм ĕçе çав материалсене тĕп вырăна хурса туса пырать. Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретариачĕ 1952 çулхи ноябрь уйăхĕнче постановлени йышăннă. Унта парти активĕн, партин мĕнпур членĕсен, çавăн пекех партире тăман массăсен çав чаплă документсене вĕренмелли çинчен каланă.

Аслă Сталинăн генилле произведенине тата КПСС XIX-мĕш съезчĕн документчĕсене вĕренес ĕç вырăнсенче мĕнле пыни çинчен «Трибуна люду» хаçат тăтăшах çырать. «Катовице воеводствинче, — тесе çырать вăл, — политикăпа воспитани тĕлĕшĕнчен пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Хуларта та, ялта та, предприятисенче те, учрежденисенче те мĕнпур комитетсемпе парторганизацисенче съезд материалĕсене вĕренеççĕ».

«Трибуна люду» пĕлтернĕ тăрăх, Варшăвăра семинарсенче лекторсемпе докладчиксем валли тĕп темăсене сӳтсе явнă.

«Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретариачĕн решенине пурнăçласа, — тесе паллă тăвать хаçат. — Лодзь хулинче семинарсем ĕçлеççĕ, унта XIX-мĕш съезд материалĕсене тĕплĕ вĕренеççĕ. Съезд документчĕсене вĕренес тĕлĕшпе парти аппаратĕнчи работниксем валли вунсакăр ушкăн тунă. Çакăнпа пĕрлех XIX-мĕш съездăн материалĕсене вĕренес ĕçе партин пур организацийĕсенче те йĕркеленĕ. Çав материалсене вĕренес ĕçе партире тăман çынсем нумай хутшăнаççĕ».

Ытти воеводствăсенче те партире тăман çынсем съезд материалĕсене активлă вĕренеççĕ. «Опольск воеводствинчи парторганизацире XIX-мĕш съезд материалĕсене вĕренес ĕçе пур çĕрте те йĕркеленĕ. Парти членĕсем 20 пин çын тата партире тăман активистсем 6 пин çын вĕренĕве хутшăнаççĕ». Краков воеводствинче партире тăман активистсенчен нумайăшĕ кружоксене çӳреççĕ.

Сталинла аслă идейăсен çутти Польша халăхне социализм патне пымалли çула яр-уççăн çутатса тăрать.

ЧАПЛĂ ИТОГСЕМ

Ирĕке тухнă Польша халăхĕ Совет Союзĕ пулăшнипе хăйĕн çĕршывĕнче социализм никĕсĕсене ăнăçлă тăвать. Польша Халăх Республики иртнĕ çулта — ултă çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнче — чаплă çитĕнӳсем тунă. Экономикăна планлас тĕлĕшпе ĕçлекен государство комиссийĕ нумай пулмасть 1952 çулта халăх хуçалăх планне мĕнле тултарни çинчен пĕлтернĕ. Çак пĕлтерни Польшăн мирлĕ экономики, наукăпа культури тата искусстви пĕр вĕçĕмсĕр аталанса пынине кăтартса парать.

1952 çулта Польшăра, тесе çырать «Трибуна люду», промышленноçра 450 предприяти яхăн туса пĕтернĕ. Вăл шутра — «Костюшко» металлурги заводĕнчи хăватлă домна кăмаки, Ченстохов хулинчи Болеслав Берут ячĕпе тăракан металлурги заводĕнчи икĕ мартен кăмаки, механизациленĕ çĕнĕ шахтăсем — «Земовит» тата «Бесела»-2, «Явожно»-2 электростанци тата ыттисем те.

Социализмлă промышленность 1951 çулхипе танлаштарсан, пĕтĕмпе 20 процент ытларах продукци туса кăларнă. Ялхуçалăхĕ çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. 1951 çулхипе танлаштарсан, тăватă тĕслĕ тĕштырă тухăçлăхĕ 4 процент пысăкрах пулнă. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ ӳснĕ. Ялсенче социализмлă сектор чылай çирĕпленнĕ, вăл акмалли мĕнпур çĕр лаптăкĕнчен 17 процентне яхăн тытса тăрать. Çакăн пек çитĕнӳсем туни çĕршывра карточка системине пăрахăça кăларма тата куллен кирлĕ таварсен пĕрлĕхлĕ хакĕсене тума май панă.

Ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Çулталăк хушшинче хуласенче 111 пин пӳлĕм ытла туса пĕтернĕ.

Польша халăхĕн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене палăртса, «Трибуна люду» хаçат çапла çырать: «Социализм лагерĕнчи çĕршывсенче — Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенче кăна халăх хуçалăхĕ çавăн пек пысăк хăвăртлăхпа ӳсме, экономика хăвăрт аталанма пултарать. Капитализмлă çĕршывсенче хĕçпăшал васкаса хатĕрлеççĕ тата вăрçа хатĕрленеççĕ. Унта экономика аталанмасть, пĕр вырăнта тăрать. Вĕсен экономики пурпĕрех пулмалли кризис умĕнче тăрать, пирĕн экономика çултан-çул ӳсет, аталанать, тĕрекленет».

1953 çулта, тесе кăтартса парать хаçат, пирĕн умра ответлă та йывăр задачăсем тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çав задачăсене пурнăçлама тытăнчĕç. Вĕсем ултă çуллăхăн тăваттăмĕш çулĕнчи заданисене ăнăçлă пурнăçлассишĕн, хамăрăн тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн, пĕтĕм тĕнчери мир лагерĕн вăй-хăватне тĕреклетессишĕн чунтан-чĕререн парăнса ĕçлеççĕ.

ОКЕАН ЛЕШ ЕНЧИ ЭЛЕКÇĔСЕНЕ ПИТЛЕÇÇĔ

Империалистла пропаганда элек сарни Польша халăхĕн анлă массисене хытă тарăхтарать. «Трибуна люду» хаçата вулакан Юзеф Апонович (Торунь хулинчен) çыру пичетлесе кăларнă. Унта вăл «Америка сасси», «Ирĕклĕ Европа» текен, «Би-би-си» тата Хĕвеланăç Европăри ытти радиостанцисен элекне тăрă шыв çине кăларать.

Юзеф Апонович çырăвĕ пирки çĕршыври нумай ĕççыннисем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене хаçат урлă каласа параççĕ. Океан леш енчи радио-суеçĕсем миллионшар простой çынсене нихçан та, нимĕнле майсемпе те улталаймĕç.

«Çыру авторĕ, — тесе çырать Варшавăра пурăнакан Хенрик Бартузи, — Польша Халăх Республикинчи тӳрĕ кăмăллă мĕнпур çынсен шухăш-кăмăлне палăртать. Тӳрĕ кăмăллă çынсем Хĕвеланăç Европăри радиостанцисем саракан суя хыпарсене сивлеççĕ, элек сарнăшăн тарăхаççĕ. Польша халăхĕ хĕвеланăçĕнчи радио-суеçĕсем ирсĕр элек сарнине пăхмасть».

Элекĕн ури кĕске, теççĕ халăх хушшинче. «Урсус» трактор заводĕнчи рабочи Михал Рехно хĕвеланăçĕнчи радиостанцисем элеклĕ, провокациллĕ хыпарсем сарнине тăрă шыв çине кăларать. «Эпир Варшавăра «Хĕвелтухăç—Хĕвеланăç» магистрале тунă чухне, — тесе çырать вăл, — «Америка сасси» тата «Би-би-си» радиостанцисем çав стройкăна хурлама тăрăшрĕç. Вăл стройкăран нимĕнле усă та пулмасть, ку вăл пропаганда кăна, тесе кăшкăрашрĕç». Анчах столицăри чаплă магистрале тахçанах туса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Рабочисене эксплуатацилекен, сăткăн Америка империализмне Юзеф Апонович тĕрĕс тăрă шыв çине кăларать, — тесе çырать столицăра пурăнакан Вацлав Пруйшчик. — Америка империализмĕ çĕнĕрен юншăн çунать, долларшăн çĕнĕ вăрçă вутне чĕртме тăрăшать.

Ĕççыннисен çырăвĕсем патриотла чаплă документсем пулса тăраççĕ. Вĕсем пирки çырса, «Трибуна люду» çакна кăтартса парать: «Çĕршывăн хуçисем çавăн пек çыраççĕ. Халăх влаçĕ çĕнсе илнисене куç шăрçине сыхланă пек сыхлакан çынсем çавăн пек çыраççĕ. Пире социализм тума çул кăтартса паракан аслă идейăна ĕненсе тăрса, тăшмансене кураймасăр, вĕсем çавăн пек çырусем çырнă».

Я. МАКАРЕНКО.

Совет Çарĕ 35 çул тултарнине урăх çĕршывсенче уявлани

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ Совет Çарĕ 35 çул тултарнине анлă палăртать.

Берлинри демократиллĕ хаçатсем çак уяв ячĕпе уйрăм статьясем тата ятарласа хатĕрленĕ материалсем пичетлесе кăларнă, вĕсенче Совет Çарĕн мухтавлă ĕçĕсемпе çĕнтерĕвĕсем çинчен каланă.

Хаçатсем малтанхи страницăсенче Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик, премьер-министр Отто Гротеволь, Халăх палатин председателĕ И. Дикман, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ Германири Совет Контроль Комиссийĕн председателĕ арми генералĕ В. И. Чуйков патне янă саламсене пичетлесе кăларнă.

Хаçатсенче çавăн пекех нумай фотоӳкерчĕксем пичетленĕ, вĕсем Совет Çарĕн воинĕсен Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсенчи тата мирлĕ ĕçри лару-тăрури боевой пурнăçне кăтартса параççĕ.

«Нейес Дейчланд» хаçат умстатьяра, сăмахран, çапла çырать: «Совет Çарĕ — чăннипех халăх çарĕ. Халăх службинче тăрса, унăн интересĕсене хӳтĕлесе, вăл халăхпа пĕрле тачă пĕтĕçсе тăрать. Халăх çарĕ пулнă май вăл пĕр тĕллев кăна тытать, унăн тĕллевĕ — халăхăн мирлĕ пурнăçне хӳтĕлесси пулать».

Хаçат Совет Çарĕн воинĕсен мораллĕ-политикăллă шайĕ пысăк пулнине палăртать. Совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕсем Ленинпа Сталин вĕсене халăх ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăма тата социализмлă Тăван çĕршыва юратма, мирĕн таса ĕçне вăрçă чĕртекен агрессорсен ирсĕр ĕçĕнчен хӳтĕлеме вĕрентсе воспитани парса çитĕнтернĕ.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин халăхĕ хăйне ирĕке кăларнă Совет Çарĕ 35 çул тултарнине савăнăçлăн палăртать. Предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче, Корея Халăх çарĕн чаçĕсенче Совет Çарĕн кунĕ ячĕпе савăнăçлă пухусем пулса иртеççĕ. Паян Пхеньянра Совет Çарĕ кунĕ ячĕпе савăнăçлă лару пулса иртнĕ. Ăна ССР Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан Корея обществин Центральнăй правленийĕ организациленĕ. Савăнăçлă ларăвăн президиумĕнче — Корейăри Ĕçлĕх партийĕпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствин руководителĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн Посолĕ, Китай Халăх Республикин Поверенннăйĕ, халăх демократи çĕршывĕсен дипломатиллĕ миссийĕсен пуçлăхĕсем. Залра Пхеньян общественноçĕн представителĕсем, хресченсем, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин геройĕсем, ĕç геройĕсем пулнă. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен Корея Халăх çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал-полковник Нам Ир доклад тунă.

Савăнăçлă ларура пулнисем пысăк çĕкленӳпе Генералиссимус И. В. Сталин патне салам яма йышăннă.

Республикăри хуласемпе уезд центрĕсенче СССР Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан Корея обществин уйрăмĕсем «Совет Çарĕ — пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхăн терекĕ», «Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăра» тата ытти темăсем тăрăх куçса çӳрекен фотовыставкăсем организациленĕ. Республикăра «Берлин паранни», Сталинградская битва», «Третий удар», «Великий перелом» кинокартинăсене пите юратса пăхаççĕ.

АЛБАНИ

ТИРАНА, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири ĕçсыннисем Совет Çарĕ 35 çул тултарнине пысăк уяв вырăнне хурса паллă тăваççĕ. Паян тухнă хаçатсем малтанхи страницăсенче Генералиссимус И. В. Сталин юлташăн пысăк портречĕсене пичетлесе кăларнă.

«Зери и популлит» хаçат умстатьяра çапла çырать:

Ленинпа Сталин туса хунă Совет Çарĕ вăл — çĕнĕ сăнарлă çар, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлекен çар. Унăн историйĕ Совет государствин мухтавлă историйĕпе, ăна туса хунă аслă Сталин, аслă полководец ячĕпе уйăрлми таччăн çыхăнса тăрать.

Совет Çарĕ—никам çĕнтерейми çар, СССР халăхĕсен мирлĕ ĕçĕн шанчăклă тĕрекĕ, пĕтĕм тĕнчере мир туса хурас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан çар.

БОЛГАРИ

СОФИЯ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Софире Болгари Халăх çарĕн Центральнăй çуртĕнче Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа савăнăçлă пуху пулнă. «Сталин! Сталин!» тесе савăнăçлăн кăшкăрса тата тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Центральнăй Комитетне тата Болгарири Коммунистсен партийĕн Вылко Червенков ертсе пыракан Центральнăй Комитетне суйланă.

Президиумра Болгари Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ генерал-полковник Иван Михайлов, халăх оборона министрĕ генерал-полковник Петр Панчевский, Болгари Халăх çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем вырăн йышăнаççĕ.

Совет Çарĕ 35 çул тултарни çинчен генерал-майор Владимир Танов доклад тунă. Хăйĕн докладĕнче вăл çапла каланă: мухтавлă Совет Çарĕ 35 çул тултарнине Совет Союзĕпе унăн паттăр воинĕсем кăна мар, Болгари халăхĕпе унăн воинĕсем кăна мар, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă çынсем паллă тăваççĕ.

Совет Çарĕн кун-çулĕ, тенĕ докладчик, вăл пролетариллĕ интернационализма, социализмпа коммунизм ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăнине кăтартакан кун-çул пулса тăрать.

Пухура пулнисем пысăк çĕкленӳпе Совет Çарĕн хăватлă çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыракан аслă çулпуç патне, Генералиссимус Сталин патне саламлă телеграмма яма йышăннă.

ДАНИ

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Копенгагенра Данипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăну енĕпе ĕçлекен Данири общество Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа пуху ирттернĕ. Зала Дани тата Совет Союзĕн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Пухура Совет Союзĕн миссийĕнче ĕçлекенсем, Китай Халăх Республикин тата халăх демократи çĕршывĕсен миссийĕсен представителĕсем пулнă.

Данипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăну енĕпе ĕçлекен Данири обществăн председателĕ профессор Иорген Иоргенсен «Мĕншĕн эпир Совет Çарне саламлатпăр» темăпа доклад тунă. Вăл каланисене пухура пулнисем ăшшăн йышăнса илнĕ.

Совет Союзĕ пулман пулсан, тенĕ Иоргенсен, Европа паян Гитлер ури айĕнче пулнă пулĕччĕ, Дани вара телейсĕр те мĕскĕн çĕршыв пулнă пулĕччĕ.

Эпир, мирлĕ пурнăçа юратакан Дани çыннисем, тенĕ юлашкинчен докладчик, Совет Çарне, нихçан та агрессиллĕ вăрçă вăрçман çара, мирпе прогресс тĕрекĕ пулса тăракан çара саламлатпăр.

Кун хыççăн пухура пулнисем совет кинофильмне курнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 21-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америкăн «В-29» йышши 17 бомбардировщикĕ Пхеньян хули çурçĕр пайĕ çине бомбăсем пăрахнă. Хулари халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, чылай çуртсемпе землянкăсене ишĕлтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем малтанхи вырăнсенчех Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине тискеррĕн тапăнать

ПХЕНЬЯН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине çаплах бомбăсем пăрахать. Ĕнер кăнтăрла Америка самолечĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Тэдон тата Кансо уезчĕсенчи ялсемпе çулсем çине темиçе хутчен тапăннă. Çуртсем нумай ишĕлнĕ, мирлĕ халăх хушшинче вилнисем тата аманнисем нумай.

Паян каçхине Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Пхеньян хулинчи халăх пурăнакан кварталсем çине тата хула çывăхĕнчи шкулсемпе больницăсем çине тискеррĕн тапăннă. Вуншар çуртсенĕ вут хыпса илнĕ, пĕр пуçламăш шкул, медицина пункчĕ çунса кайнă, хĕрарăмсемпе ачасем хушшинче вилнисемпе аманнисем 40 çын ытла.

Çакăн хыççăн «вĕçекен крепоçсем» Кăнтăр Пхенан провинцийĕнче Тэдон уездĕнчи Енгунри ялĕ районĕнче Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес госпиталĕ вырнаçнă вырăна 300 ытла бомба пăрахнă. Больница çурчĕсене пурне те çĕмĕрсе тăкнă, напалм пăрахса çунтарса янă, аманнă çынсем нумай пĕтнĕ, 2 врач вилнĕ, 7 врач тата санитар йывăр аманнă. Енгунри ялĕнче шкул çуртне тата хресченсен темиçе килне ишĕлтернĕ, 15 хĕрарăм тата ача вилнĕ е аманнă. Тэдон уездĕнчи Чхонгери ялĕ çине те бомбăсем нумай пăрахнă. Енгунри ялĕнчи госпиталь çине юлашки 8 уйăх хушшинче американецсем 3 хутчен бомбăсем пăрахнă.

Паян ирхине Америкăн реактивлă самолечĕсем каллех Пхеньян çывăхĕнчи Нампхо районĕнчи ялсем çине тапăннă.

ТУРЦИ АРАБ ÇĔРШЫВĔСЕНЕ АГРЕССИЛЛĔ ÇЫВĂХ ХĔВЕЛТУХĂÇ БЛОКНЕ КĔРТМЕ ТĂРĂШАТЬ

БЕЙРУТ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем тата радио пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Турци араб çĕршывĕсемпе «питĕ интересленме» пуçланă, вăл вĕсене агрессиллĕ Çывăх Хĕвелтухăç блокне кĕртме тăрăшать.

Сирире тухса тăракан «Аль-Файха» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Турци араб çĕршывĕсемпе «çывхарас» тесе пысăк вăй хурса ĕçлет. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çывăх вăхăтра Турци ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кĕпрюлю Сирие, ун хыççăн ытти араб çĕршывĕсене кайса килме шутлать.

Ливанра тухакан «Аль-Джарида» хаçат, хăйĕн корреспонденчĕ Дамаскран пĕлтерни çинчен каласа, çак пĕлтерĕве çирĕплетет, хăй енчен тата çапла хушса çырать: Кĕпрюлю араб çĕршывĕсенче пулнисĕр пуçне тата Пакистанпа Индире те пулма шутлать. Хаçат кăтартса панă тăрăх, Кĕпрюлю çак çĕршывсен руководителĕсемпе пĕрле, Турци хутшăннипе, араб çĕршывĕсемпе хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсем хутшăннипе «пĕрлехи командовани» тăвасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явма шутлать. Çак «командовани», тесе çырать хаçат, хĕвеланăçри державăсен Вăтам Хĕвелтухăçĕнче хĕçпăшаллă системăсем тума палăртакан планĕсемпе килĕшсе тăрать.

Бейрутри радио араб çĕршывĕсен информаци агентствинчен илсе пĕлтернĕ хыпар тăрăх, хальхи вăхăтра Анкарăна пынă Ливан журналисчĕпе калаçнă чухне, Кĕпрюлю «США, Англи, Франци пулăшнипе араб çĕршывĕсемпе Турцие вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен пĕрлешме» чĕннĕ.

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче

БУХАРЕСТ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян 18-мĕш вăйă пулнă. 18-мĕш вăйă хыççăн мастер Толуш малта пырать, вăл 17 очко выляса илме май пур çĕртен 13 очко илнĕ. Смыслов—иккĕмĕш вырăнта, вăл 18 очко выляса илме май пур çĕртен 12 очко илнĕ. Петросян—16 очко выляса илме май пур çĕртен 11 очко, Болеславский—17 очко выляса илме май пур çĕртен 11 очко илнĕ.

ШУПАШКАРТИ ПИОНЕРСЕН ÇУРТĔНЧЕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: радиотехникăна вĕренмелли кружок занятийĕ. Инженер В. С. Васильев юлташ (варринчи) çамрăк радиолюбительсене радиоприемник схемипе паллаштарать.

М. ЕГОРОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ТИНĔС-ÇАР КЛУБĔНЧЕ

Шупашкарти тинĕс-çар клубĕн пĕр пӳлĕмне çамрăксем пухăннă. Вĕсем—тинĕс-çар клубĕнче вĕренекен Досааф членĕсем.

— Паян эпир хăвăрт çӳрекен катерăн моторне вĕренме тытăнатпăр,—тет мотористсен курсĕн руководителĕ А. Смирнов юлташ.—Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче шыв çинчи çапăçусенче çакăн пек катерсем пысăк вырăн йышăнчĕç. Паттăр совет морякĕсем тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хăюлăх кăтартрĕç, тăшмана пыра-пыра çапрĕç. Шывра пулнă чаплă çĕнтерӳсенче хăвăрт çӳрекен катерсем хисеплĕ вырăн йышăннă. Халĕ ĕнтĕ моторпа паллашăпăр...

Тимлĕ итлеççĕ Досааф членĕсем руководителĕн сăмахне, вăл каланине пĕлме, ăнланма тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть кунта мотористсен виçĕ уйăхлăх курсĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Хулари тĕрлĕ предприятисемпе учрежденисенчи çамрăксем моторист специальноçне туянчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен пĕлĕвĕпе производствăра туллин усă кураççĕ. Н. Абрамов, В. Петров, Х. Матвеев çамрăксем «Водосвет» трестĕнче, Н. Михайлов—Атăл леш енчи электростанцире, С. Алексеев «Заготзерно» пунктĕнче мотористсем пулса ĕçлеççĕ.

— Тинĕс-çар клубĕнче вĕренсе пĕлӳ илни маншăн питĕ кирлĕ пулчĕ. Эпир хамăр пĕлӳпе мирлĕ ĕçре усă куратпăр, —тет курсран вĕренсе тухса моторист специальноçне илнĕ С. Алексеев çамрăк.

Вăл мотористсен курсĕнче çĕнĕрен вĕренме пуçланă çамрăксемпе сăмах пуçларĕ, кирлĕ сĕнӳсемпе канашсем пачĕ.

— Лайăх специальность суйласа илнĕ эсир. Пархатарлă специальность, — терĕ вăл.

Иртнĕ çулта Шупашкарти тинĕс-çар клубĕнчен сигнальщиксем, рулевойсем, радиотелеграфистсем, водолазсем, моделистсем тата ытти специалистсем те вĕренсе тухрĕç.

Шупашкарти кооператив техникумĕнче вĕренекен Кримкова тинĕс-çар клубĕнчи сигнальщиксен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ вăл хăй сигнальщиксен ушкăнне ертсе пырать.

Досааф членĕсем тинĕс-çарĕн нумай енлĕ специальноçĕсене тимлĕн, тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕренекенсем хушшинче—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра, пир-авăр комбинатĕнче, лента тĕртекен фабрикăра, «Заготзернора» ĕçлекенсем, педагогика, ялхуçалăх институчĕсенче тата техникумсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем пур.

Тинĕс-çар клубĕ ĕççыннисем хушшинче пропаганда ĕçне анлăн туса пырать. Клубăн обществăллă инструкторĕсем, активлă досаафовецсем хулари ĕççыннисем хушшинче вуншар лекцисемпе докладсем туса панă, калаçусем ирттернĕ.

Катер командирĕ К. Ятмасов «Рослгаввино» совхозĕнчи фермăра ĕçлекенсем валли «СССР—аслă тинĕс держави» тема тăрăх лекци вуласа панă. Д. Облинов Сосновка поселокĕнчи тата Шупашкарти çамрăксем валли «Ленин—Сталин партийĕ—Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне организацилекенĕ тата воспитани параканĕ» тема тăрăх лекцисем ирттернĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне хатĕрленнĕ май, клуб чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Клубра пысăк выставка уçăлнă. Унта Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чапа тухнă морякасене, вырăс флочĕ мĕнле аталанса, ӳссе пынине, тинĕс çинче пулса иртнĕ çапăçусене сăнласа кăтартнă.

Клуб çумĕнче лаборатори ĕçлет. Çак лаборатори пулăшнипе Досааф членĕсем модельсем нумай туса хатĕрленĕ.

Тинĕс-çар клубĕ хăйĕн воспитанникĕсемпе çыхăну тытать. Тинĕс-Çар Флотĕнче службăра тăракан офицерсемпе матроссем клуб ячĕпе çырусем çыраççĕ. Унта вĕсем хăйсене тинĕс-çар пĕлĕвĕ панăшăн тав тăваççĕ, клубра вĕренсе илнĕ пĕлӳ службăра питĕ усăллă пулни çинчен çыраççĕ.

— Пирĕн çамрăксем шыв спорчĕпе хытă интересленеççĕ. Тинĕс-çар клубĕнче пулас морякасене вĕренме пур условисем те çителĕклĕ. Çамрăксем хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ. Вĕсен ĕмĕчĕ—клубра вĕренсе илнĕ пĕлӳсене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, мире юратакан совет халăхĕн телейĕшĕн парасси,—тет клуб начальникĕ Василий Савельевич Кравченко юлташ.

А. ЖИРНОВ.

Монголи халăхĕ Сухэ-Батора хисеплесе асăнать

УЛАН-БАТОР, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ Монголири революциллĕ халăх партийĕн тата демократиллĕ халăх государствин никĕсне хывнă Сухэ-Батор вилнĕренпе 30 çул тултарнине анлă палăртать. Паян Сухэ-Батор вилтăпри патне Монголи столицинчи ĕççыннисем тата выльăх ĕрчетекен аратсем вĕçĕ-хĕррисĕр пырса тăнă. Вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем нумай хунă.

Рабочисен, аратсен тата интеллигенцин çĕршер представителĕсем Сухэ-Батор çурт-музейне пырса курнă. Вĕсем Монголи халăхĕн çулпуçĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан экспонатсене интересленсе пăхнă.

Каçхине музыкăпа драма театрĕн çуртĕнче Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Улан-Батор хула комитечĕн, Аслă Халăх Хурал Президиумĕн тата Министрсен Совечĕн, партипе обществăллă организацисен тата Монголи çарĕн представителĕсемпе пĕрле, Сухэ-Батор вилнĕренпе 30 çул тултарнă ятпа хурлăхлă-чаплă лару пулса иртнĕ.

Хурлăхлă-чаплă ларура пулнисем И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

КИТАЙРА МАШИНА-ТРАКТОР СТАНЦИЙĔСЕМ НУМАЙЛАНАÇÇĔ

ПЕКИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет: Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра ĕçлесе тăракан машина-трактор станцийĕсемсĕр пуçне, кăçал çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче тата 10 машина-трактор станци тăваççĕ.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсем енĕпе иртнĕ çулта пулса иртнĕ Пĕтĕм Китайри конференци йышăннă тăрăх, механиксемпе трактористсем хатĕрлеме пĕр уйăхлăха курссем организациленĕ. Нумаях пулмасть çак курссенчен 134 механик тата тракторист вĕренсе тухнă. Вĕсем машина-трактор станцисем тунă çĕре хутшăнма хăйсем ĕçлекен çĕнĕ вырăнсене тухса кайнă.

САТАРÇĂСЕНЕ СУД ТУНИ

БЕРЛИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 20-мĕшĕнче Вартенбергра (Бранденбург округĕ) кулаксемпе вĕсен майлисен ушкăнне суд тума тытăннă. Айăпланакансем: Гельмут Бетхер, Фриц Арендт, Франц Барковский, Эльза Бетхер тата Герда Арендт. Вĕсене фашистла пропаганда сарнăшăн, саботаж тунăшăн, республика хуçалăхне хирĕç пыракан айăплă ĕçсем тунăшăн айăплаççĕ.

Америка агрессорĕсем çаплах бактериллĕ хĕçпăшалпа усă кураççĕ

Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Мукденран çапла пĕлтернĕ:

Америка сывлăш-çар вăйĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорине вĕçсе кĕрсе тата бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем пăрахса çаплах хăйсен тискер ĕçне тăваççĕ.

1952 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче 11 сехет те 00 минутра тăшманăн 3 самолечĕ Беньси уезчĕ çийĕпе вĕçсе иртнĕ. Вĕсем симĕс çулçăсем пăрахса хăварнă.

1952 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче тăшман самолечĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорине вĕçсе кĕнĕ, вĕсем пысăк çĕр лаптăкĕ çине бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем пăрахса хăварнă. Çак самолетсем Ляоси провинцийĕнчи Цзинь, Бэйчжэнь, Паньшань, Тайань, Хэйшань уезчĕсен çийĕпе вĕçсе иртнĕ. Вĕсем эрешменсем нумай пăрахса хăварнă. Çак эрешменсене самолетсем вĕçсе кайнă хыççăн 10 е 20 минутран тупнă. Асăннă эрешменсем çулсем çинче, уйсенче, йывăçсем çинче, çуртсем çинче, телеграф юписем çинче çӳренĕ.

Бэйчжэнь уездĕнче пухнă эрешменсене Китайри паллă бактериологсем тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсене пурне те дизентери тата çĕпĕр чирĕн бациллисем ерни палăрнă.

1952 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче 11 сехет те 00 минутра тăшман самолечĕ Ляоси провинцийĕнчи Лишу уезчĕ тĕлĕнчен вĕçсе иртнĕ, вăл унта эрешменсем нумай пăрахса хăварнă.

1952 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче 5 сехет те 00 минутра тăшман самолечĕсем Ляодун провинцийĕнчи Йоуянь уезчĕ тĕлĕнчен вĕçсе иртнĕ, вĕсем шăнса ларнă çырмасем çине эрешменсем, нăрăсем тата ытти хурт-кăпшанкăсем нумай пăрахса хăварнă.

Çӳлте асăннă хурт-кăпшанкăсене пурне те тата тăшман самолечĕсем çинчен пăрахса хăварнă ытти япаласене вырăнти халăхсем тата эпидемие хирĕç кĕрешекен отрядсем çийĕнчех пĕтернĕ.

Иранра çамрăксене арестленĕ

ТЕГЕРАН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Колониллĕ чуралăх йĕркине хирĕç кĕрешмелли куна ирттернĕ май, ĕнер Тегеранри университетра тата хулари ытти районсенче, çавăн пекех чылай кинотеатрсенче демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрацисене пуринчен ытла студентсемпе вĕренекен çамрăксем хутшăннă. Кĕске вăхăтлăх митингсем пулса иртнĕ. Листовкăсем салатнă. Листовка авторĕсем Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнче йăва çавăрнă Америкăпа Англи империализмне хирĕç кĕрешме чĕннĕ, çавăн пекех Америкăн çар советникĕсемпе ытти çавнашкал советниксене Иранран хăваласа кăларма, Трумэн программин 4-мĕш пунктне пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен Америка администрацине пĕтерме чĕннĕ. Çак администраци пуç пулса тăнипе Америка империалисчĕсем Англипе Иранăн нефть компанийĕ йышăннă вырăна хăйсем йышăнасшăн.

Хаçатсем палăртнă тăрăх, митингсене хăваласа салатнă чухне полици хулан пĕр районĕнче пăшалсенчен сывлăшалла пенĕ. Февралĕн 21-мĕшĕнче Тегеранра пурĕ çĕр çамрăка арестленĕ.

«Кейхан» тата «Дад» хаçатсем: арестленĕ çамрăксенчен пĕр пайне Персидски заливри Харег (Харг) утравĕ çине кăларса яраççĕ пулмалла, тесе çыраççĕ. Çак утрав çинче Америка империалисчĕсемпе вĕсен Иранри тарçисене хирĕç тăнăшăн Тегеранран кăларса янă çамрăк рабочисемпе студентсем нумай.

«Бесуе аянде» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка империалисчĕсен ирсĕр ĕçĕсене хирĕç протестлесе икĕ уйăх каялла Тегеран университетĕнче пулса иртнĕ демонстрацие хутшăннăшăн арестленĕ студентсем 60 çын ытла, тата влаçсем юлашки вăхăтра арестлесе Тегеран тĕрмине хупса лартнă миршĕн тăракансен пысăк ушкăнĕ, хăйсене судпа следствисĕр тĕрмере тытса усранине хирĕç протестлесе, апат йышăнмасăр выçă ларма йышăннă.

„Европа çарĕ“ тенĕскерне тăвассине хирĕç пыракан юхăм

РИМ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тăракансен Италири комитечĕн секретариачĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: февралĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Италире «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» тенĕскерне тăвассине хирĕç кĕрешмелли тата ăна тăрă шыв çине кăлармалли эрнелĕх пулса иртет. Çак эрнелĕх хушшинче мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсем общественноçа «Европа çарĕ» тенĕскерне тăвасси çинчен йышăннă договорпа паллаштараççĕ, мĕншĕн тесен çак договора пуçаракансем договорта каланă нациллĕ никама пăхăнманлăха пӳлсе тăракан статьясем çинчен парламентпа халăха пĕлтерме хăймаççĕ.

Лайăх ĕçлекен драма кружокĕ

ЭЛĔК. Тавăт ялĕнче тăваттăмĕш çул колхоз клубĕ ĕçлет. Унăн ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать. Клуб ăшне лайăх илемлетнĕ. Каннă вăхăтра колхозниксемпе ялти çамрăксем клубра радио итлеççĕ, шашкăлла выляççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ. Агитаторсем час-часах докладсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Клуб çумĕнче драма кружокĕ аван ĕçлет. Иртнĕ çулта 15 спектакль кăтартнă. Кăçал «Нарспи», «Ялта», «Айдар», «Ывăлĕ патĕнче», «Савнă тусăм, хура куçăм» пьесăсене çичĕ хутчен лартса пачĕç. Спектакльсем лартма кружок çывăхри ялсенчи клубсене те кайса килет.

Иртнĕ çулта кружок членне—Е. Смирновăна халăх творчествин Шупашкарти çурчĕ хисеп грамотипе наградăланă. П. Ивановпа Ф. Васильев комсомолецсем тата çавăн пекех А. Маркова комсомолка ВЛКСМ Чăваш обкомĕн хисеп грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. Районти культурăпа çутĕç пайĕ клуба хӳткупăс панă.

И. Георгиев юлташа драма кружокĕн пахa ĕçĕсемшĕн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Культурăпа çутĕç управленийĕ икĕ хутчен, ВЛКСМ Чăваш обкомĕ виçĕ хутчен хисеп грамоти парса наградăланă. Георгиев юлташ кăçал Мускаври Н. К. Крупская ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри халăх творчестви çурчĕ çумĕнчи виçĕ çул вĕренмелли курса заочно вĕренсе пĕтерчĕ.

С. ТИХОНОВ.

Радио кĕртеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Суçталăк каялла «Спотара» поселокĕнче радиоузел турĕç. Юлашки вăхăтра ку радиоузелтан Мерчĕкри вăрман участокĕнчи рабочисен, Бугуян ялĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен килĕсене радио кĕртнĕ.

Ял Совечĕ тăрăшнипе февралĕн 14-мĕшĕнче Эконом ялне те радио кĕртрĕç. Çак кунсенчех пур колхозниксен килĕсене те радиофикацилеççĕ.

Г. РУСАНОВ.

Спорт ăмăртăвĕсем

Февралĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. «Молния» спорт обществи стадионĕнче хоккей вăййипе республикăра мала тухмалли ăмăрту пычĕ. «Спартак» тата «Пищевик» командисен тĕлпулăвĕнче спартаковецсем 17:0 шутпа çĕнтерчĕç. Чапаевски поселок команди «Молния» спорт обществи хоккеисчĕсене 1:14 шутпа выляса ячĕ.

Каçхине «Молния» спорт обществи катокĕнче çамрăксем чылайччен конькипе ярăнчĕç.

Атăл леш енче, учительсен канмалли çуртĕ çывăхĕнче, йĕлтĕрçĕсен республикăра мала тухмалли ăмăртăвĕ пычĕ.

ПĔЛТЕРНИ

Февралĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотекинче И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă ĕçне харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли çак тема тăрăх лекци пулать: «И. В. Сталин юлташ социализмăн экономикăллă тĕп законне уçса никĕслени».

Лекцие экономикăллă наукăсен кандидачĕ П. Л. Лебедев юлташ вулать.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Февралĕн 24-мĕшĕнче чăвашла спектакль
«ÇЕМЬЕ ЧЫСĔ»
Февралĕн 25-мĕшĕнче чăвашла спектакль
«АЙДАР»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01299 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.